24-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1941 ИЮНЬ 26 КĚÇНЕРНИКУН 148 (5863) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ.

Пирěн ěç—тěрěс ěç. Тăшмана çапса аркатăпăр. Çěнтерÿ пирěнте пулě!

Хěрлě Çар—Совет халăхěн тăван ывăлě

Пирěн тăван çěршывăн государство чиккисенче Хěрлě Çар ултавлă та хаяр тăшмана хирěç геройла хăюллăн, чыслăн та паттăррăн çапăçать. Пирěн халăхăн пěтěм шухăшěсемпе туйăмěсем, унăн пěтěм юратăвě—лере, чикěсем çинче, хăйěн шанчăклă ывăлěсемпе пěрле. Паттăр боецсен, командирсен тата политработниксен чăтăмлăхěпе хăюллăхě пире мăнаçлă туйăм парса савăнтарать. Совет халăхěн геройла историйěн страницисем çине тăван Хěрлě Çар халех те ěнтě паттăр та чаплă çěнě ěçсене çырса хучě.

Тăван çěршыва хÿтлекен паттăрсене—мухтав!

Мăнкамăлланса кайнă тăшман пысăк мар халăхсен вăйсăр çарěсем тěлěшпе, хăшпěр государствăсен витěрех çěрсе кайнă влаçри çыннисем тěлěшпе тунă çăмăл та йÿнě çěнтерÿсемпе ашкăнса кайнă тăшман çакна пирвайхи çапăçусенчех туйса илчě тата часах татăклăнах курса ěненě: халě ěнтě, совет чиккисенче, вăл çěнě типлă çара, çěнě çара, Хěрлě Çара тěл пулчě.

Çакă вăл—чи хăватлă, ирěклě тата хăйěн вăйěпе мăнаçлă совет халăхěн çарě. Çакă вăл—хăйěн мěнпур тăшманěсене çěнтернě, пěр çěре тачă пěтěçнě тата Ленинăн—Сталинăн аслă партийě ертсе пынипе аслă государство туса çирěплетнě халăхăн ÿчěпе юнěнчен çуралнă çар.

Хăйěн çěршывěнчи мирлě строительствăра совет халăхě сарса янă гигантла пысăк вăйран пěтěм тěнче тěлěнсе тăчě. Тарăхса тата патриотла çилěпе хаярланса çěкленнě совет халăхě таса совет çěрěн никам пырса тěкěнмелле мар положенийě çине алă çěкленě вăрă-хурахла фашистла банда пуçě çине каплантарса антаракан вăйсем те тěнчене тěлěнтерěç.

Пирěн ěç—тěрěс ěç. Çакна ăна Хěрлě Çарăн кашни боецě пěлет. Вăрçă тěллевěсемпе задачисем уншăн паллă. Унăн çурăмěсем хыçěнче пирěн тăван çěршыв, вăрçа хутшăнасшăн пулман аслă çěршыв сарăлса выртать. Хěрлě Çарăн воинě тăван çěршыва, тăван халăхăн ирěклěхěпе чыслăхне, хăйěн çемьин пурнăçěпе ěçне хÿтлет. Вăл Совет Союзěн гражданинěн таса тивěçлěхне пурнăçа кěртет. Пěчěк ачасемпе хěрарăмсен хăрушсăрлăхě, хуласемпе ялсен, заводсен, чугунçулсен—совет халăхě çавтери тăрăшса, пěтěм вăя хурса ěçленипе, çавтери пысăк юратупа тунă мěнпур ырлăхпа пурлăхăн хăрушсăрлăхě Хěрлě Çар воинěнчен, унăн паттăрлăхěнчен тата çапăçури искусствинчен килет.

Пирěн Хěрлě Çара хирěç тăраканни вăл—фашистла захватчиксем хăйсем хыççăн вăрă-хурахла ěç тума, çаратусем тума, ирсěр пусмăрлă ěç тума илсе пыракан йыткěтěвěсем. Преступленилле гитлерла банда хăйěн тискер кайăкла тапăнăвěн тěллевěсемпе задачисене нимěç халăхěнчен пытарса тăрать. Ăна тăрă шыв çине кăларěç, фашизма—ăса çухатнă капитализмлă реакцин йěрěнтерекен ирсěр бандине — Хěрлě Çар нимěн хăварми çапса аркатě, пěтерсе тăкě.

Хěрлě Çарпа пěтěм халăха пěрлěхлě патриотла хавхалану çыхăнтарса тăрать. Пирěн çěршыври кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент тăван çěре хÿтлесси çинчен, асса кайнă тăшмана çěмěрсе тăкасси çинчен шухăшлать. Совет патриочěсен пурин те пěр шухăш, пěр кăмăл—ирсěр тăшмана аркатса пăрахмаллах çапса çěмěрес шухăшпа кăмăл. Çак хěрÿллě кăмăлпа хавхаланса ашшěсем, амăшсем, арăмěсем хăйсен ывăлěсене, хăйсен упăшкисене Хěрлě Çара ăсатаççě.

— Манăн ывăлăм, тăшмана татах та вăйлăрах çěмěр. Çавăн пек çěмěр ăна, унран кěл те ан юлтăр.

Çакăн пек сăмахсемпе çапăçăва ăсатать хăйěн ывăлне—Совет Союзěн Геройне Курочкин юлташа унăн амăшě.

Çапла калать хăйěн ывăлěсене — красноармеецсене, командирсене, политработниксене—пěтěм совет амăшě—тăван çěршыв.

Хăйěн нумай ěмěрлě историйěнче пирěн тăван çěршыв асса кайнă захватчике, хăй вырăс халăхěн çěрне парăнтарассипе мухтаннă захватчике пěрре кăна мар курнă. Анчах та чапа тухнă авантюрист-воительсен янăравлă карьерисем яланах пораженипе тата намăслăн вěçленнě.

1918 çулта хěрлě партизансем пыра-пыра çапнипе çар пурлăхěсене, снаряженине, лашасене пăраха-пăраха Украинăран тарма васкаса, Германин мухтанчăк генералěсем хăйсен мăнаслăшěсем—пăр çинчи паллă çапăçура çěмěрсе тăкнă мăнаслашшěсем тарнă чухнехи ěçе тепěр хут тунă.

Хăйěн çěршывěн никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенийěшěн пынă отечественнăй вăрçăсенче вырăс халăхěн боевой традицийěсем туптанса çирěпленнě. Вăл вăрçă искусствин генийěсене çуратса кăларнă. Суворов ячě тăшмансен сехрисене хăпартнă. Суворов шкулěнчен 1812 çулти геройсем, Севастополь оборонин геройěсем çуралса тухнă.

Хăйěн халăхěн мухтавне малалла сарса пыракан Хěрлě Çар çак геройла традицисене нумай хут вăйлатрě. Хěрлě Çара большевикла парти, халăхпа нимěн уйăрăлми çыхăнса тăракан парти воспитани парса çитěнтерчě тата туптаса çирěплетрě, рабочи класс хушшинче çуралса ÿснě парти, çěнтерÿ тăвас ирěкпе, наступленилле вăй-хавалпа, историллě аслă тěллеве уççăн пěлсе тăнипе хурçă пек çирěпленсе тăракан парти воспитани парса ÿстерчě тата туптаса çирěплетрě. Большевикла партине туса йěркелекенсем—Ленин тата Сталин,—вěсемех Хěрлě Çарăн, çěнě типлă çарăн, рабочисемпе хресченсен çарěн организаторěсем пулса тăраççě.

Наступлени традицийěсене, вăрçăри активлăхăн, çапăçура мала тухассин традицийěсене чыслăн сыхласа усракан Хěрлě Çара совет халăхě вěçě-хěррисěр юратать. Совет халăхě хăйěн çарěшěн, амăшě юратнă ачишěн тăрăшнă пек тăрăшать. Хăйěн Хěрлě Çарне чи çěнě боевой техника, чи юлашки маркăллă вооружени парас тесе, совет халăхě нимěнпе вăй-хала та хěрхенмен тата халě те хěрхенсе тăмасть. Çак ěç валли хăватлă оборона промышленноçě туса хунă. Çак ěçшěн заводсенче фронта кайнисен ашшěсемпе тăванěсем пěтěм вăйран тăрăшса ěçлеççě. Пирěн çěршывăн чи лайăх ăсěсем, совет çěрěн чи лайăх аллисем хăйсен тăван ывăлě—Хěрлě Çар валли чи çěнě техникăна ÿстерсе çирěплетеççě.

Фронтпа тыла тимěр пек çирěп пěрлěх пěтěçтерсе тăрать. Заводсемпе колхозлă уйсенче совет гражданěсем, винтовкăна чăмăртаса тăнă пекех, хăйсен аллисенче ěç орудийěсене чăмăртаса тăраççě. Йалтах—çěнтерÿ валли! Йалтах—тăван çěршыв валли!

Çак пěрлěхпе вăйлă пирěн Хěрлě Çар, çак пěрлěх ăна пěтěмěшпех, çÿлтен пуçласа аяла çитиех çирěплетсе тăрать. Хăйěн составěпе Хěрлě Çар аслă çěршыва, эксплоататорла классене пěтернě çěршыва, совет халăхěн никам çěмěрейми моралльě-политикăллă пěрлěхне туса çирěплетнě çěршыва палăртса тăрать. Хěрлě Çарăн боецěсем, командирěсем, политработникěсем—çар умěнчи тивěçлěхе пěтěм чěререн хаклакан, вăрçă ěçне лайăх пěлекен, тăван çěршыва, Ленин—Сталин партине пěтěм чěререн парăннă çынсем. Хěрлě Çарăн командăй составě вăл—халăхпа нимěн уйăрăлми çыхăнса тăракан çынсем. халăхăн сăн-сăпачě, унăн чи лайăх, пěтěм чěререн парăннă, чи талантлă представителěсем. Хěрлě Çар боецěсенче, командирěсенче, политработникěсенче пирěн халăх хăйěн шанчăклă ывăлěсене, паттăр патриотсене, аслă совет çěршывне геройла хÿтлекенсене курса тăрать.

Хěрлě Çар пěлет, унăн геройла кěрешěвне пěтěм малта пыракан этемлěх пěтěм чěререн кăмăлласа сăнаса тăрать. Хěрлě Çарăн мěнпур çěршывсенче çěршер миллион çывăх тусěсем пур.

Совет халăхě хăй çěнтерессине çирěппěн шанса тăрать. Вăл пěлет, кěрешÿ çăмăл мар. Малта—йывăр кунсем. Анчах та совет халăхě йывăрлăхсене хăнăхнă. Йывăрлăхсене çěнтерсе пырса, вăл граждан вăрçинче интервентсене çěнтерчě. Йывăрлăхсене çěнтерсе пырса, вăл совет чиккисем çине алă çěкленě тăшмансене çапа-çапа çěмěрчě, вěсене пирěн кÿршěсем те, пěтěм тěнче те лайăх астăваççě.

Коммунистсем, партире тăракан тата партире тăман большевиксем яланах малти ретсенче пынă. Вěсем, Ленинăн—Сталинăн ялавне çÿле йăтса, Хěрлě Çарăн малти речěсенче пыраççě.

Тăван Хěрлě Çар валли—пирěн пěтěм тăрăшу, пирěн пěтěм юрату! Çулăмлă салам сире, пирěн тăвансем, хăюллă та паттăр геройсем!

Тăшмана вěçне çитиех тата пěр шеллемесěр çěмěрěр!

(«ПРАВДА» умстатьи, июнěн 25-мěш.)

Совет Союзěн Геройě тата Маршалě, СССР Оборона Халăх Комиссарě С. К. Тимошенко. (ТАСС фото-ÿкерчěкě).

Совет информаци бюровě пěлтерни*)

Июнěн 24-мěшěнче противник Шауляй, Каунас, Гродно—Волковыск, Кобрин, Владимир—Волынский тата Бродск енěсенче наступлени сарса пынă, ăна хирěç Хěрлě Çар войскисем вăйлăн çине тăрса çапăçнă.

Шауляй енче противникăн мěнпур атакисене сирсе янă, ăна пысăк çухатусем кÿнě. Çак енче пирěн мотомеханизированнăй соединенисем контрнаступлени туса, противникăн танковăй чаçěсене çěмěрсе тăкнă тата унăн мотополкне пěтěмпех пěтерсе тăкнă.

Гродно—Волковыск тата Брест—Пинск енěсенче Гродношăн, Кобриншăн, Вильношăн, Каунасшăн хаяр çапăçусем пыраççě.

Бродск енче танклă пысăк соединенисен вăйлă çапăçăвěсем пыраççě, çапăçусем пынă вăхăтра противника йывăр поражени кÿнě.

Пирěн авиаци, çапăçу хирěнче çěр çинчи войскăсене ăнăçлăн пулăшса пырса, противникăн аэродромěсемпе вăрçăшăн пысăк вырăнта тăракан çар объекчěсене аркатса пěтермеллех çěмěре-çěмěре тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче пирěн авиаци 34 самолет персе антарнă.

Фински заливра пирěн тинěс-çар флочěн карапěсем противникăн пěр подводнăй лодкине путарнă.

Румыни территорийě çинчен Севастополь çине нимěç бомбардировщикěсем икě хутчен пырса тапăнни çине ответлесе, совет бомбардировщикěсем Констанцапа Сулин çине виçě хутчен кайса бомбăсем пăрахнă. Констанца çунать.

* * *

Нимěç бомбардировщикěсем Киев, Минск, Либава тата Рига çине икě хутчен пырса тапăнни çине ответлесе, совет бомбардировщикěсем Данциг, Кенигсберг, Люблин, Варшава çине виçě хутчен кайса бомбăсем пăрахнă, çар объекчěсене питех те вăйлăн çěмěрнě. Варшавăри нефтебазăсем çунаççě.

Июнěн 22, 23 тата 24-мěшсенче совет авиацийěн 374 самолет пěтнě, вěсене пуринчен ытларах аэродромсемче çěмěрнě. Çак тапхăр хушшинче сывлăшри çапăçусенче совет авиацийě нимěçсен 161 самолетне персе антарнă. Кунсăр пуçне, малтанлăха палăртнă тăрăх противникăн аэродромěсем çинче нимěçсенне 220 самолетран кая мар пěтерсе тăкнă.

* * *

Нимěçсем çыхăнăва пăсма 5—10-шар парашютист-диверсанта, совет милиционерěсен формисемпе тумлантарса, пирěн çыхăнăва пăсма антара-антара хăвараççě. Пирěн çарсен тылěнче диверсант-парашютистсене пěтерес тěлěшпе ěçлекен истребительнăй батальонсем туса йěркеленě. Истребительнăй батальонсене ертсе пырас ěçе Шалти Ěçсен Халăх Комиссариачě çине хунă.

* * *

Финляндия хăйěн территорине Германи войскисемпе Германи авиацийěн аллине панă. Акă вунă кун хушши ěнтě ССР Союзěн чиккисемпе юнашар районсенче Германи войскисемпе Германи авиацийě пухăнать. Июнěн 23-мěшěнче Германин Финлянди территорийě çинчен вěçсе тухнă ултă самолечě Кронштадт районě çине пырса бомбăсем пăрахма хăтланса пăхнă. Самолетсене каялла хăваласа янă. Пěр самолетне персе антарнă, нимěçсен тăватă офицерне тыткăна илнě.

Июнěн 24-мěшěнче нимěçсен 4 самолечě Кандалакша районě çине пырса бомбăсем пăрахма хăтланнă. Кулоярви районěнче Германи войскисен хăшпěр чаçěсем чикě урлă каçма хăтланнă. Самолетсене хăваласа янă. Германи войскисен чаçěсене каялла сирсе янă. Тыткăна лекнě нимěç салтакěсем пур.

* * *

Румыния хăйěн территорине пěтěмěшпех Германи войскисен аллине панă. Румыни территорийě çинчен совет хулисемпе войскисем çине нимěç авиацийě киле-киле тапăнать кăна мар, тата нимěçсемпе румынсен войскисем выступленисем те тăваççě, вěсем совет войскисене хирěç пěрле кěрешеççě. Румын-нимěç войскисем Черновицы хулине тата Прут юханшывěн хěвелтухăç çыранне пěр хут çеç мар хăйсен аллине çавăрса илме хăтланса пăхнă, анчах вěсен ěçěсем ăнăçсăр пулнă. Нимěççемпе румынсене тыткăна илнě.

*) Паянтан пуçласа вăрçă ěçěсем çинчен калакан пěлтерÿсене совет информаци бюровě пама тытăнать.

Ěçри çирěп дисциплинăшăн

Пěр çулталăк каялла — 1940 çулти июнěн 26-мěшěнче — СССР Верховный Совечěн Президиумě, ВЦСПС тăратнă тăрăх, «Сакăр сехетлě ěç кунě, çичě кунлă ěç эрни çине куçасси çинчен тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хăйсен ирěкěпе тухса кайма чарасси çинчен» Указ кăларчě.

Государствăшăн питех те пысăк вырăнта тăракан çак мероприяти пирěн çěршывăн оборонăпа хуçалăх хăватне тата ытларах тěреклетме пулăшрě. Çавăнпа та ěнтě ăна пěтěм халăх ырласа кěтсе илчě, вăл пирěн çěршывра калама çук пысăк çěкленÿ пуçарса ячě. Социализмлă тăван çěршывăн миллионшар патриочěсем татах та лайăхрах ěçлеме пуçларěç, вěсем хăйсен ěç вăхăтěнчи кашни минутăпа туллин усă курма, социализмлă ěç дисциплинине куллен кун çирěплетсе пыма, ěç тухăçлăхне хăпартса пыма пуçларěç.

Социализм çěршывěнчи ěççыннисем, историллě Указа пурнăçа кěртсе пырса, продукци туса кăларассине ÿстерес, халăх пуянлăхне нумайлатса пырас тěлěшпе пысăк çитěнÿсем турěç. Ěç дисциплинине çирěплетнě тата 8 сехетлě ěç кунě туса хунă май, промышленноçпа транспорт ěçě те чылаях лайăхланчě.

Промышленность продукцине туса кăларасси ÿсни пирěн çěршывăн хуçалăхпа оборона хăватне татах та тěреклетрě, Хěрлě Çарпа Хěрлě Флота çěнě те пуян техникăпа хěçпăшаллантарчě. Çапла совет халăхěн хěçпăшаллă вăйě татах та вăйланчě, вăл тăшманшăн хăрушă вăй пулса тăчě.

Германин урса кайнă фашисчěсем пирěн тăван çěршыв çине вăрçăпа килсе тухма хăйрěç пулсан, халь ěнтě вěсен Хěрлě Çарăн хăватне хăйсен ěнси çинче тÿссе пăхмалла пулать. Паянхипе пиллěкмěш кун ěнтě пирěн мухтавлă Хěрлě Çар совет çěршывěн чиккисем çине вăрă-хурахла тапăннă фашистсене хирěç паттăррăн çапăçать. Совет правительстви çав вăрă-хурахла тапăнăва сирсе ярас тата Германи çарěсене пирěн тăван çěршыв территорийěнчен хăваласа кăларас тěлěшпе тăвакан ěçсене пěтěм совет халăхě ырласа саламлать тата тăшмана çěнтерме кирлисене Хěрлě Çара валли пурне те туса парать.

Молотов юлташ кăçалхи июнěн 22-мěшěнче радио тăрăх тухса каланă сăмахра совет гражданěсемпе гражданкисене кашнине харпăрхăй вырăнěнче тÿрě кăмăлпа ěçлеме чěнчě. Вăл çапла каларě: «Пирěн пěтěм халăх халě никăçанхинчен те пěтěçÿллě тата пěрлěхлě пулмалла. Хěрлě Çар, Флот тата авиаци ыйтăвěсене пурнăçа кěртмешкěн, тăшмана çěнтермешкěн пирěнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăн-чăн совет патриотне тивěçлě пек дисциплинăллă, организациллě пулма тата хăйěн пурнăçне шеллемесěр кěрешме хушмалла».

Совет халăхě фашистсен ирсěр ěçне хирěç производствăра, колхоз уйхирěнче çěнě çěнтерÿсем тунипе ответлет. Пирěн республикăри ěççыннисем, пěтěм 200 миллионлă совет халăхěпе пěрле, çапла калаççě: тăшмана çěнтерме Хěрлě Çара мěн кирлě, çавсене пěтěмпех туса паратпăр, кашни харпăрхăй вырăнěнче тÿрě кăмăлпа ырми-канми ěçлетпěр, чăн-чăн совет патриотне тивěçлě пек дисциплинăллă, организациллě пулатпăр тата хамăрăн пěтěм вăя оборона ěçне паратпăр. Шупашкарти Водопьянов ячěпе тăракан тир-сăран комбинатěнчи рабочисемп[е]
работницăсен, служащисен тата инже
нерсемпе техниксен митингěнче А. Ор
лова работница çапла каларě:
Фашистла бандитсене çапса аркатм
«паян эпě хамăн упăшкана Хěрл
Çар ретне ăсатрăм. Ана эпě Хěрлě Ça
ретěнче хěçпăшала çирěп тытса, пирě
телейлě тăван çěршыв çине вăрă-ху
рахла килсе тапăннă ирсěр фашистсе
не ним юлмиччене çěмěрсе тăкма, ки
ле çěнтерÿ тунипе таврăнма хуш
ятăм. Эпир кунта, производствăр
пурте тÿрě кăмăлпа ěçлесе, ěç тухăç
лăхне кулленех ÿстерсе пырса тăва
Хěрлě Çара пулăшса пырăпăр».
Халăх тата Хěрлě Çар—тата фронтп
тыл хушшинчи çирěп çыхăну — çакăн
та ěнтě пирěн никам çěнтерейми вă
йăн хăвачě.
Социализмлă тăван çěршывăн чикки
сенче Германи фашизмě чěртсе ян
пушарăн çулăмě ялкăшать. Çак йыва
самантра ěç дициплинине çирěплете
ăна пăхăнса ěçлес ыйту нихçанхинче
çивěччěн тухса тăрать. Кашни пре
приятире, учрежденире, колхозра бол
шевикла йěрке тата организациллě
пулмалла, кашни предприяти кирек хă
вăхăтра та тата партипе правител
ство панă кирек мěнле заданине т
хăвăрт тата вăхăтра пурнăçлама пу
тартăр. Кашни рабочи, служащи тат
колхозник, государство умěнче пěтě
ответлăха туйса илсе, ěç дисципли
не пăхăнса, ăна çирěплетсе пымал
Хальхи вăхăтра, пěтěм çěршыв обор
на валли ěçленě вăхăтра, ěç дисци
линине пăхăнмасăр ăна пăсакан çы
вăл—халăх тăшманě, ун пек çынсе
тăван çěршыв умěнче тивěçлě отв
тытмалла.
Хамăрăн пěтěм вăй-хала, хастарлă
ěç тухăçлăхне тата продукци хисепне ÿ
терес çěре хумалла. Мěншěн тесе
ку тěлěшпе тунă пирěн кашни ут
çěршывăн оборона хăватне ÿстере
тăшмана татах та вăйлăнрах пыр
çапма пулăшать. Çавăнпа пěрлех, «ě
ре пěтěм вăй-хала хурса тăрăшни
эпир пысăк сыхăлăхпа çыхăнтар
пыма тивěçлě. Нимěн иккěленмелл
те çук, пирěн пата хăйěн шпионěсе
пе диверсанчěсене кěртсе ярас те
тăшман хушăк-çурăксем тупма хăтла
са пăхě. Вилěм вěсене!» («Правда»
Кашни рабочи, колхозник, служащ
хăйěн предприятийěсемпе учреждений
сене çивěч куçпа сыхласа тăма т
вěçлě.
Колхозниксен, тырпулсене уйран пу
са кěме хатěрленнипе пěрлех, тырп
ла, колхоз пурлăхне сыхлас ěçе орг
низацилемелле. Тăшман хăйěн кирев
аллине унта та чăсма пултарать. Эп
пěтěм ěçе пысăк пахалăхпа ту
пырассишěн кěрешмелле. Колхозникс
тěп задачи—уйри тырпулсене кěске в
хăтрах пысăк пахалăхпа пухса кěрте
си. Кашни колхозник тăван çěршыв
малашлăхне пěтěм чěререн туйса и
се, халиччен пулман хастарлăхпа т
та паттăрлăхпа ěçлемелле.
Коммунистсемпе комсомолецсем пр
изводствăра, учрежденире тата колх
уйхирěсенче ěçěн организаторěсем, с
циализмлă ěç дисциплинин большеви
ла образецěсене кăтартакан çынс
пулмалла.
Çěнтерÿ хамăртан килет. Ленин—Ст
лин партийě, Совет Правительстви т
та Аслă Сталин тавра таччăн пěтěç
пěтěм вăй-хала, пěтěм тимлěхе Хěр
Çара пулăшас ěçе, тăван çěршы
фашистла вăрă-хурахсенчен сыхла
хăварас ěçе хурар!

Хěрарăмсем арçынсем вырăнне ěçлеме юлаççě

ÇĚМĚРЛЕ, июнěн 25-мěш. **(Телефонпа хамăр корр.).** Юлашки кунсенче древкомбинат коллективě нихăçанхинчен те пысăк хастарлăхпа ěçлет. Рабочисемпе работницăсем тата инженерсемпе техниксем пурте пěр шухăш-кăмăлпа производствăра тÿрě кăмăлпа ěçлесе, фашистла çěлен-калтасене çапса аркатма паттăр Хěрлě Çара пулăшаççě. Июнěн 23-мěшěнче комбинат хăйěн пěр кунхи планне 119,8 проц. тултарчě. Уйрăмах 4-мěш №-лě цех паха результатсем кăтартать, вăл çав кун плана 156,7 проц. тултарчě. Кашни цех, смена, бригада, кашни рабочи хăйне панă заданине темиçе хут ирттерсе тултарассишěн пěтěм вăя хурса кěрешет. Июнěн 23-мěшěнче 3-мěш №-лě цехри паллă стахановец коммунист Ионов юлташ нормăна 455 проц., фрезеровщик М. Перепелкин 108 проц. тултарчěç. Халь çеç ФЗО шкулěнчен вěренсе тухнă А. Еремеев кашни кунхи нормăна чылай ирттерсе тултарать. 1-мěш №-лě цехри Алексевпа Ширяев юлташсен бригадисем куллен 1,5—2 норма тăва[ç]çě.

Рабочисем тата инженерсемпе те
никсем хăйсен ирěкěпе Хěрлě Çар р
не илме ыйтса райвоенкомата заявл
нисем нумай параççě. 3-мěш №-лě це
ри технорук Анисимов юлташ фрон
яма ыйтса заявлени панă. Вăл Хěр
Çартан иртнě кěркунне çеç таврăн
Польша панěсене тата белофинсене х
рěç пынă çапăçусене хутшăннă. Çав
пекех ытти рабочисем те доброволе
сем пулса фронта тухса каяççě.

Работницăсем мобилизациленнě ра
чисен специальноçěсене вěренсе, вěс
вырăнне ěçлеме тăраççě. Стахановк
комсомолка Вера Большаковăпа Н
дежда Герасимова халиччен станочн
цăсем пулса ěçленě, халě Хěрлě Ça
кайнă рабочисем вырăнěнче слесарьс
пулса ěçлеме пуçларěç. Наумовăпа Ка
пушкина столярсем пулса ěçлеме т
тăнчěç.

Х. ЛИСИН

Заем укçине 1505 тенкě тÿленě

Эпеç ялсоветěнчи «Искра» колхоз членěсем (Улатăр районě) Виççěмěш Пятилетка (тăваттăмěш çулхи кăларăм) Заема 1505 тенкěлěх çырăнчěç. Заем укçине пěтěмпех тÿлесе татрěç.

Заем сарнă çěрте заем уполном[о]ченнăйě К. Надюков юлташ активл[ă] ěçлерě. («Ленинский путь» хаçат).

Çěнě Зеланди премьер-министрěн заявленийě

ЛОНДОН, июнěн 23-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: Çěнě Зеланди премьер-министрě Фрэзер, хальхи вăхăтра Лондона пынăскер, çапла пěлтернě: Çěнě Зеланди правительстви Германия Совет Союзě çине тапăнни çинчен Черчилль хăйěн сăмахěнче каласа панă политикăпа пěтěмěшпех килěшет, çав политика çумне пěрлешет.

Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссариатěнче

Турцин ССР Союзěнчи посолě г. Хайдар **Актай** хăйěн кăçалхи июнěн 25-мěшěнче панă вербальнăй нотинче Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссарнатне çакăн çинчен пěлтернě:

«Турци посольстви Ютçěршыв Ěçěсен Халăх Комиссарнатне çакăн çинчен пěлтерет: Германипе СССР хушшинчи вăрçăна пула пулса тăнă положенине кура, Республика Правительстви Турцин нейтралитечě çинчен пěлтерме йышăнчě».

Совет Союзĕн граждăнĕсемпе гражданкисем! Революциллĕ сыхăлăхăн, дисциплинăн, организацилĕхĕн çирĕплĕхне кăтартар!

Çирĕп тыл фронтра çĕнтерӳ тума май парать

Июнĕн 23-мĕшĕнче, занятисем пĕтнĕ хыççăнах, Чăваш АССР Совнаркомĕнчи, Госпланри тата Наркомхозри работниксем пурте, пĕр çын пек пулса, митинга пухăнчĕç.

Чăваш АССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ В. Т. Харитонов юлташ СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах çинчен, Германи военщини пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине килсе тапăнни çинчен каласа пĕлтернĕ хыççăн, митинг участникĕсем пĕрин хыççăн тепри трибуна çине хăпарчĕç, хăйсем юнлă фашистсене пĕтĕм чĕререн йĕрĕнсе тарăхни çинчен каларĕç. Совет Правительстви фашистла захватчиксене çĕмĕрсе тăкас тата пирĕн çĕр çинчен хăваласа кăларас тĕлĕшпе йышăннă решенине пурте, пĕр çын пек пулса, ырларĕç.

Трибуна çинче Совнарком консультанчĕ И. Сапожников юлташ. Вăл çапла калать:

— Эпĕ радио тăрăх В. М. Молотов юлташăн сăмахне итлени хыççăн, манăн чышкăсем чăмăртанчĕç, чĕрере хаяр та ирсĕр тăшмана хирĕçле курайманлăх вĕреме пуçларĕ. Ирсĕр тăшмана ылханма сăмахсем те çитмеççĕ.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ социализмлă тăван çĕршывăн ирсĕр тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкĕç. Асса кайнă тăшмана аркатса тăкăпăр. Манăн алла хĕçпăшал тытса çапăçас, фронта тухса каяс сунсем иртнĕ. Эпир, ватăсем, кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче пĕтĕм вăя хурса, тӳрĕ кăмăлпа, вăя шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, халăхсен сулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсен вара эпир те хамăрăн ывăлсене пулăшма кайăпăр. Эпĕ çакăншăн савăнатăп: манăн кĕçĕн ывăлăм фронтра алла хĕçпăшал тытса хамăрăн социализмлă тăван çĕршывăн таса чиккисене фашизм тапăнăвĕнчен хӳтлет, тепĕр ывăлăм паян мар пулсан, ыран партипе правительство ăсатса янă— çавăнта кайма хатĕр тăрать.

— Пирĕн нумайĕшĕн упăшкисем, тăванĕсем социализмлă тăван çĕршыва паттăррăн сыхлама Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн ретĕсене тухса каяççĕ, — тет А. Центрова юлташ.—Вĕсен вырăнне совет хĕрарăмĕсем тăрса ĕçлĕç, пирĕн тыл яланах çирĕп пултăр тесе, эпир, пирĕн упăшкасем, тăвансем фронта пĕтĕм вăя хурса çапăçнă пекех, кунта тăрăшса ĕçлĕпĕр, мĕншĕн тесен тыл лайăх ĕçлени фронтра çитĕнӳсем тума май парать.

Митингра Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. В. Сомов юлташ тухса каларĕ. Вăл работниксене пысăк организованность кăтартма, большевикла сыхă пулма, харпăрхăйĕн участокĕнче тата малашне ăçта лартнă çав вырăнта тӳрĕ кăмăлпа, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, вăхăтне пăхса тăмасăр, вăй-хала шеллемесĕр ĕçлеме, большевикла парти, Совет правительстви тата аслă сулпуç Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕçме чĕнчĕ.

Пирĕн халăх, унăн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ социализм çĕршывĕ çине тапăннă тăшмана çĕмĕрсе тăкнине татах тепĕр хут пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса парĕç. Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç, вăл çĕнтеретех!

Митинга пухăннисем, пурте пĕр шухăшлă пулса, çакăн пек резолюци йышăнчĕç:

«Германири фашистла правительсен шайккин — пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн таса чиккисем çине ирсĕррĕн тапăннă шайккăн ирсĕр ĕçĕсем çине ответлесе, эпир, Чăваш АССР Совнаркомĕнче, Госпланра тата Наркомхозра ĕçлекен работниксем, Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçĕпĕр, пирĕн правительство каланине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырăпăр.

Хамăрăн правительство чĕннĕ тăрăх юлташсене фронта ăсатса, эпир кунта, çирĕп тыл çĕнтерӳ тума май панине яланах асра тытса, тыла ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пырăпăр. Çакна тума ĕç тухăçлăхне татах та çӳлерех хăпартăпăр, ĕç дисциплинине татах та ытларах çирĕплетĕпĕр Партипе правительство, пирвайхи хут чĕнсенех алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва хӳтлеме тăрăпăр.

Сывă пулччĕр пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă тăван çĕршыв!

Сывă пултăр тăван коммунистла парти тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен сулпуçĕ Сталин юлташ!»

ХАЛĂХ ХАЯРЛĂХĔ

Тăхлан пуçлă,
Йытă сăн-питлĕ
Тăшман ыткăнчĕ пирĕн çине.
Юн шăршипеле ӳсĕрлнĕ Гитлер
Чĕр какай шухăш тытрĕ çиме.

Анчах ирсĕрĕн сарă асавĕ
Пырса тăрăнчĕ хурçă çине.
Çын çиен,
Çук, эс урăх асаймăн,
Эс çăтаймăн хĕвел тĕнчине.

Санăн тулчĕ шăпу-ăраскалă,
Ме, эс бомба çăт, йытă-шакал.
Санăн сăхă пырна çунтармалăх
Пирĕн çитĕ шăраннă металл.

Хĕвеле тĕтĕмпе хупăрлаймăн,
Çук, чараймăн çĕре çаврăнма.
Пĕтĕм чăнлăх тăрать пирĕн майлă,
Çут хĕвел çаврăнать пире май.

Хĕвеле пӳрнепе те ан тĕллĕр
Тенĕ ĕлĕк-авал ваттисем.
Хĕвеле хирĕç талпăнчĕ Гитлер,
Вилес умĕн урса, йӳтесе.

Хĕвеле хирĕç тăнă тискершĕн
Çавăнпа пулĕ вилĕм кăна.
Тăшман пуçĕ çине тоннăшерĕн
Хурçă-тимĕр, тăхлан вăркăнать.

Пĕт, çухал, йытă-рыцарь, мур йышĕ,
Çĕр питне тек эс ан варала.
Эпир хамăрăн аслă çĕршывшăн
Тăнă пĕтĕм халăхпала.

Кун пек чух пирĕн халăх хаяр вăл,
Кун пек чух хуçма çук ун вăйне.
Тăшмана ку расра та вăл ярĕ
Бомба алтнă çăва шăтăкне.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ.

Фашизма—вилĕм!

Çĕр çине вилĕм акакан, халăхсем хушшине вăрçă, пусмăрлăх, выçлăх саракан Германи фашизмĕ социализмлă çĕршыва тапăнать, вăл пирĕн ешĕрекен ирĕклĕ çĕршывăн таса чиккисем урлă каçса кĕме талпăçать. Кусçулĕпе юн тăкакан вăрçăсене паян кунччченех тимлĕн сирсе тăнă Совет Союзĕн гранитла çирĕп çыранĕсем çине тискер фашизмăн урнă хумĕсем киле-киле çапăнаççĕ. Фашизм, пирĕн ирĕклĕхе пĕтерсе, пире Гитлер умне чĕркуççи çине лартасшăн хăтланать. Анчах та пĕлччĕр ылханлă, выçлăх фашистсем, пĕлтĕр юншăн антăхакан Гитлер: пирĕн Совет Союзĕ вăл класхирĕçĕвĕпе хавшанă Франция мар, пансен Польши мар, вăл вăйсăр хĕçпăшаллă Югославипе пĕчĕкçĕ Греция те мар. Совет Союзĕ вăл 200 миллион çынна коммунизм ялавĕ тавра пĕр ĕмĕтпе тăванлăн пĕрлештерсе тăракан, пысăк техникăллă, вăйлă Хĕрлĕ Çарлă аслă çĕршыв. Пирĕн Аслă Союзри тĕрлĕ чĕлхеллĕ нацисен хăйсен юратнă Сулпуçĕ Сталин тавра таччăн пĕтĕçсе, пĕр халăх — совет халăхĕ пулса тăраççĕ. Ку халăх хăйĕн Октябрь революцийĕпе çĕнсе илнĕ тивĕçлĕхсене пĕтерме никама та парас çук. Унăн кирек мĕнле хаяр тăшмана та пуçĕнчен çапса çĕмĕрме вăйĕ çителĕклĕ.

Эпир вăрçасшăн пулман. Çĕнĕрен çĕнĕ фабрик-заводсем, çĕнĕрен хуласем туса — хамăр çĕршыв промышленноçне халиччен этем историйĕ курман çӳллĕхе хăпартасшăн пикенсе ĕçлеттĕмĕр. Эпир — ялсене колхозлă хуçалăх урлă çирĕплетсе уйсенче вăйлă тырпул туса илесшĕн кĕрешеттĕмĕр. Эпир, Совет çĕрĕнчи халăхсем, пурте пĕр тăван пек килĕштерсе пурăнса, хамăрăн социализмлă культурăна тĕнчери чи вăйлă, чи илемлĕ культура тума тăрăшаттăмăр. Чăн та, хамăрăн пĕрре тытăннă чаплă та хисеплĕ ĕçсене тума эпир нихăçан та чарăнас çук. Вĕсене малалла та çаплах çирĕппĕн туса пырăпăр. Анчах та, çак вăхăтрах юншăн антăхакан фашизм пирĕн мирлĕ ĕçсене кансĕрлеме е чарса лартма тапăнчĕ пулсан, эпир унăн ирсĕр аллисене çапса хуçма пĕлĕпĕр. Çилли тулнă халăх ылханлă тăшмана хурçă пек пĕр чăмăр пулса, пуçĕпех тĕппĕн çапса аркатĕ.

Эпĕ хам, — малтанхи тĕнче вăрçинче пулнăскер, — фронтра аманса нимĕç военщинин тыткăнне те тӳссе курнă çын. Россия çĕрне çĕмĕрçе кĕме тăнă германецсене хирĕç ун чухнех юн тăкиччен çапăçнă пулсан, паянхи кун, ирĕклĕ социализм çĕршĕн çапăçассинче пуçăма хума та хатĕрех.

Вилĕм — ылханлă фашизма!

С. ЭЛЬГЕР.
Чăваш халăх поэчĕ.

Хĕрарăмсем тракторсемпе ĕçлеççĕ, комбайнсемпе ĕçлеме пулаççĕ

СЕНТЕРВАРРИ. Машинно-тракторнăй станци тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хĕрсе хатĕрленет. Халĕ комбайнсене тата ытти машинăсене юсаççĕ. Çак ĕçе хĕрарăмсем активлăн хутшăнаççĕ.

Фронта кайнă трактористсем вырăнне хĕрарăмсем тракторсемпе ĕçлеме тытăнчĕç. Кăçал курсран вĕренсе тухнă 5 трактористка—Александрова, Иванова, Захарова, Орехова юлташсем пуçласа трактор çине ларчĕç. Вĕсем колхозсен уйхирĕсенче çĕртме сухи тунă çĕрте чаплă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем «У—2» тракторпа норма тăрăх 3 гектар вырăнне 3,95—4 гектар сухалаççĕ.

— Эпир хамăрăн тăвансем, упăшкасем вырăнне тракторпа ĕçлеме тытăнатпăр. Вĕсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн ретĕнче тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешчĕр. Эпир тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕрĕпĕр, ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсене те аван туса пырăпăр. Эпир ытти хĕрарăмсене те арçынсем вырăнне ĕçлеме чĕнетпĕр,—теççĕ трактористкăсем, совет патриоткисем.

Пирĕн МТ Станцин татах 8 трактористка, комбайнер помощникĕсем 2 хĕрарăм пур. Вĕсем те арçын трактористсемпе комбайнерсем вырăнне ĕçлеме пулаççĕ.

Халĕ 3 хĕрарăма производствăран уйăрмасăр тракторпа ĕçлеме вĕрентетпĕр.

А. БЫКОВ.
МТС директорĕ.

Колхозсен чечекленсе выртакан уйхирĕсем çине тăшман ури килсе пусас çук

КИЕВ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Ĕнер тата паян Киев облаçĕнчи ялсенче питех те нумай митингсем пулса иртнĕ, çав митингсенче колхоз хресченĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр кĕрешме тата тăшмана çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăни çинчен каланă.

Киев районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозри митингра доярка-орденоносец Давиденко юлташ сăмах тухса каланă.

— Хамăрăн юратнă аннемĕр—тăван çĕршыва асса кайнă тăшманран хӳтлесе хăварас тесе, вăя та, пурнăçа хăйне те шеллемĕпĕр,—тенĕ вăл.—Хĕрлĕ Çарпа мĕнпур ĕççыннисем валли продуктсем çителĕклĕ пулччăр тесе татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр.

Колхозник Мазниченко юлташ каланă сăмахра тăшмана хирĕçле вĕçĕ-хĕррисĕр курайманлăх, аслă тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратни тапса тăрать.

— Граждан вăрçи çулĕсенче нимĕç оккупанчĕсем Украинăри ĕççыннисенчен тискер кайăкла мăшкăлланине, ун чухне вĕсем Украинăри ялсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкнине, çунтара-çунтара янине эпир нихăçан та манас çук,—тет вăл.—Ун чухне вырăс халăхĕ тăванлă пулăшу панипе Украина халăхĕ тăшмана тăван çĕр çинчен хăваласа ячĕ. Халĕ те Гитлер, хăйĕн хăлхисене курайман пекех, Украинăна кураймĕ. Колхозсен чечекленсе выртакан уйхирĕсем çине тăшман ури килсе пусас çук! Фашистла Германин асса кайнă правителĕсем Хĕрлĕ Çарăн штыкĕсем çине, хурçăпа брони çине пырса тăрăнса, хăйсен шăлĕсене хуçса пĕтерĕç. Тăван çĕршыва хӳтлеме пирĕн пĕтĕм халăх çĕкленсе тăрĕ. Эпир çĕнтеретпĕрех!

ТБИЛИСИ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Республикăри уйхирсемпе плантацисенче хĕрӳллĕ ĕç пуçланнă. Колхозсем тырпула вырса пухаççĕ. Фашистсем совет çĕрĕ çине ирсĕррĕн килсе тапăнни çинчен пĕлсен, Грузири колхозниксем хăйсен митингĕсенче каланă сăмахсенче, уйхирте пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, тырпула срокра тата пĕр тăваксăр пухса кĕртме тупа тунă. Çак обязательствăна практикăллă ĕçпе çирĕплетеççĕ. Тырпула пухса кĕртес ĕç калама çук пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Паянхи кун тĕлне, иртнĕ çулта çак вăхăтра пулнипе танлаштарсан, тĕштырă культурисене 18 пин гектар нумайрах, табака 6 хут нумайрах пухса кĕртнĕ.

Цитруслă культурăсен плантацийĕсем çинчен пысăк тухăçлăх илессе кĕтеççĕ.

Питех те пысăк тухăçлă виноград çитĕнсе пырать. Нумай плантацисенче виноградăн кашни тĕпĕ çинче 25—30 шар пысăк сапака шутланать.

СТАЛИНГРАД, июнĕн 24-мĕш (ТАСС). Патриотла хĕрӳллĕ туйăма кăтартса, колхозниксем нихăçанхинчен те организованнăрах, питех те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем трактор, автомобиль рулĕ умне, комбайн штурвалĕ умне лараççĕ, фронта каякан арçынсем вырăнне тăрса ĕçлеççĕ.

Чернышевски районри колхозниксем, комбайнерсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту татах та анлăрах сарăлса кайнă. Вĕсем хăйсем умне тырпула кăтартуллă пухса кĕртес задача лартнă. Комбайнсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме пулаççĕ. Çавăн пекех тырпула элеваторсене кунĕн-çĕрĕн леçсе тăмалла тăваççĕ.

Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр

Суту-илӳ работникĕсен митингĕ йышăннă резолюци

СССР Совнаркомĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха итленĕ хыççăн, эпир, митинга пухăннисем, Совет Союзĕнчи пирĕн хуласемпе ялсем çине ирсĕррĕн килсе тапăннă фашистла Германин урлă йыттисене хаяррăн тарăхса ылханатпăр.

Совет правительстви тăван çĕршывăн таса чиккисенчен фашистла йытăсене хăваласа ярас тĕлĕшпе йышăннă мероприятисене ырлатпăр. Партипе правительствăна, аслă учителе Сталин юлташа çакăн çинчен шантарса калатпăр: ĕç тухăçлăхне ӳстерсе суту-илӳ ĕçне лайăхлатса, таварçаврăнăш планне вăхăтра тултарса пыратпăр. Эпир, Шупашкарти суту-илӳ работникĕсем, хамăрăн телейлĕ тăван çĕршыва сыхлама кайма кирек хăш минутăра та хатĕр.

Сывă пултăр пирĕн социализмлă юратнă тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр паттăр Хĕрлĕ Çар тата унăн руководителĕ Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ Тимошенко юлташ!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен сулпуçĕ тата учителĕ Аслă Сталин!

Урса кайнă йытăсен кĕтĕвĕ

Чăвашсен педагогика институтĕнчи комсомолецсем фашистла варварсем пуçарнă юнлă вăрçă çинчен хыпар илсенех, хăйсене мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтса, ВЛКСМ Шупашкар хула комитетне вуншарăн-вуншарăн заявленисем панă.

Истори факультетĕнче III курсра вĕренекен сталинла стипендиат Никандров хăйĕн заявленинче çапла çырать:

«Пирĕн тăван çĕршыв кирек-хăçан та çĕнтерӳçĕсен ретĕнче пулнă. Ку тискеррĕн тапранса тухнă выçса антăхнă шакалсене те мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Хĕрлĕ Флот, тĕнче халиччен курман вăйлă авиаци пĕр тĕпренчĕк юлмиччен аркатса тăкĕç. Намăссăрсем пирĕн ирĕклĕ çĕршыв çине çил акрĕç, анчах вутлă тăвăл вырса илĕç. Эпĕ пĕтĕм чĕререн ыйтатăп: илĕр мана мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне. Тăван çĕршыв мана пăхса ӳстерчĕ. Эпĕ ăна варварсенчен хӳтлес тесе богатырла çапăçăп!»

Мĕнпур кăмăлтан Хĕрлĕ Çара илме ыйтакан комсомолецсем кунта татах та нумай.

Литература факультетĕнче I курсра вĕренекен Валя Смирновăпа унăн юлташĕсем халех, çак вăхăтрах вăрçă хирĕсене кăларса ярсан, хăйсем пĕтĕм чĕререн савăнмалли çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем медсестрасен шкулĕнчен вĕренсе тухнă, пулеметчиксен кружокĕнче вĕренсе, унпа усă курма хăнăхса çитнĕ.

Биологи кабинетĕнчи лаборантка комсомолка А. Кринецкая çапла çырать:

«Манăн профессисем нумай. Эпĕ мотоциклетистка. Анчах манăн алăсем мотоциклет рульне çеç мар, автомашина рульне те çирĕппĕн тытса пыма пултараççĕ. Ленинла-Сталинла комсомол мана ăçта ярать, эпĕ унта кайăп. Çĕршывăн приказне пур чухне те мухтавлăн пурнăçлăп. Агрессорсем пуçарнă вăрçă ман упăшкана та илсе каять. Эпир арçынсем вырăнне тăрăпăр, пурте пĕр кăмăлпа тăван çара пулăшăпăр. Вилĕм—фашистсене!»

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Хĕрарăмсем трактор рульне тытнă, комбайн штурвалĕ умне тăнă

СИМФЕРОПОЛЬ, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Пысăк тухăçлă тырпула пухса кĕртме тытăннă колхозсемпе районсен хисепĕ кунсеренех ӳссе пырать. Крымри колхозниксемпе колхозницăсем пысăк тухăçлă ĕçĕн чаплă образецĕсене кăтартаççĕ. Кашни комбайнпа тата лобогрейкăпа тырпул вырса пухасси чылай ӳснĕ.

Биюк-Онлар районĕнче паян пур колхозсенче те тырпула пухса кĕртес ĕç пуçланнă. «Согласие» тата «Новая жизнь» колхозсенче ĕçлекен комбайнерка Жукова юлташ мĕнпур хĕрарăмсене фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса ĕçлеме чĕннĕ. Комбайнерка Жукова чĕнсе калание Калинин тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсемпе ытти нумай колхозсенчи колхозницăсем саламласа кĕтсе илнĕ. Паян Елена Поп пирвайхи хут комбайнпа ĕçлеме пуçланă.

— Пирĕн тăвансемпе упăшкасем çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн ретĕсенче паттăррăн кĕрешчĕр, — тет вăл, — эпир тырпула чи кĕске срокcенче, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртĕпĕр.

Нумай хĕрарăмсем трактор рульне тытнă, комбайн штурвалĕ умне тăнă, тырпул пухса кĕртмелли машинăсемпе ĕçлеççĕ.

Колхозниксен производствăллă çĕкленĕвĕ

ВАРНАР. Совет Союзĕ çине фашистла Германия вăрçăпа тапăнни ĕççыннисене вĕçĕмсĕр тарăхтарса ячĕ. Рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ урса кайнă тăшмана, Германи фашисчĕсене çапса аркатма, Октябрьти Социализмлă революцире кĕрешсе илнине сыхласа хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса çапăçма, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне, Хĕрлĕ авиацине пулăшма яланах хатĕр тăнине кăтартса параççĕ.

Булатовăри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем фашистла бандăсен ăскер те киревсĕр ĕçне ответлесе, кăçалхи тырпула кĕске срокра пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕме, колхозниксем хушшинче çар ĕçне вĕренессине лайăхлатма пулаççĕ. Халĕ колхозниксем ялхуçалăх машинисене, урапасене, шăналăксене тата ытти япаласене хатĕрлесе çитерни. Авăн çапма итемсем хатĕр. Осоавиахим организацийĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать, колхозниксене çар ĕçне вĕрентессине организациленĕ.

«Волонтер», «Колхозница», Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те производствăллă çĕкленӳ пысăк.

Колхозниксем тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Шуркассинчи «Социализм» колхоз членĕсем, колхоз производствинче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пыма тăрăшаççĕ.

Суракине пысăк пахалăхпа вĕçленĕ хыççăнах, колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕме тата ытти ĕçсене тума тытăнчĕ. Колхозри строительство ĕçне йĕркеллĕ туса пыма ятарласа пĕр бригада организациленĕ. Строительство бригади халĕ сысна фермин вити тума пуçăннă.

А. ВАСИЛЬЕВ.

ÇЕНТЕРУ ПИРĔНТЕ ПУЛАТЬ!

Казаксен станицинче

АКСАИСКАЯ СТАНИЦИ (Ростов облаçĕ), июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Казаксен авалхи традицийĕ тăрăх мобилизаци пункчĕсене фронта каякансен тăванĕсемпе палланă çыннисем ушкăн-ушкăнпа пыраççĕ: çара каякан военнообязаннăйсене ăсатса яраççĕ. Çак кунсем 1914 çулти мобилизацин пирвайхи кунĕсем пек мар, йăлтах урăхла. 1914 çулта казаксене империализмлă вăрçăна яма мобилизацилеĕнĕ. Ун чухне пĕтĕм станица куççуль тăкнă. Хальхи вăхăтра казаксем хуйхăрмаççĕ, вĕсен шухăш-кăмăлĕсем хаваслă та боевой. Мобилизаци калама çук организованно—патриотла пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Паян станицăри клубра пулнă митингра хăйĕн икĕ ывăлне фронта ăсатса янă ватă казак Бычок юлташ сăмах тухса каланă.

— Халăхăн хăватлă çĕкленĕвĕ хальхи пек пысăк пулнине эпĕ нихăçан та курман,—тенĕ вăл.—Халĕ эпир хамăр мĕншĕн çапăçассине пĕлетпĕр. Фашистла йыткĕтĕвĕ, пирĕн çĕршыва пусмăрласа илме тата ăна чĕркуççи çине тăратма май килĕ тесе, пирĕн çине килсе тапăнчĕ. Çакă вăл нихăçан та пулас çук! Эпир тĕрĕс ĕçшĕн çапăçатпăр, гитлерла ирсĕрсене çĕр пичĕ çинчен шăлса ыватăпăр. Колхозлă Донăн боевой традицийĕсене çирĕп тытса пыракан ывăлĕсем мобилизаци пункчĕсене организованно пыраççĕ. Вĕсем хăйсен çар умĕнчи тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме хатĕр тăраççĕ.

Мобилизаци пуçланнăранпа иртнĕ икĕ кун хушшинче хăйсен сывлăхĕ начар пулни çинчен калакансем пĕр çын та пулман. Призывран пăрăнса юлма шутлакансем пĕр çын та çук. Йăлтах урăхла, мобилизаципе çара каймалли çĕршер казаксем кунсеренех çар комиссарĕ патне пыраççĕ, хăйсене тăван çĕршыва хӳтлесе çапăçакан çара яма ыйтаççĕ.

Ĕçри хастарлăх

ОДЕССА, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Одесса облаçĕнчи предприятисенчи ĕççыннисем ĕçри хастарлăхăн чаплă образецĕсене кăтартаççĕ.

Христиновка станцинчи депора ĕçлекен 30 стахановец паровоз деталĕсене пухас ĕçре 5 кун программине 8 сехет хушшинче тултарнă. Январьти восстани ячĕпе тăракан заводăн коллективĕ питех те лайăх, ритмично ĕçлет. Рабочисен пысăкрах пайĕ паян, ĕнерхи пекех, сменăри заданине ирттерсе тултарать. Механически цехри мастерăн коммунист Олейниковăн пролечĕ нормăна 135 процент тултарнă. Слесарьсен Карасинский юлташ ертсе пыракан бригади—200 процента яхăн тултарнă.

Ленин ячĕпе тăракан станкостроительнăй заводра нумай рабочисем хăйсен заданийĕсене 1,5—2,5 хут тултарнă.

Фашистсем совет çĕршывĕ çине вăрăхурахла тапăнни çинчен пĕлсен, Котовский районĕнчи машинно-тракторнăй мастерскойри автогенщиксем, автомашинăсем, двигательсем, молотилкăсем тата косилкăсем юсамалли плана 250 процент тултарнă.

ГОРЬКИЙ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). В. М. Молотов ячĕпе тăракан автозаводра нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Кузницăри рабочи Якушев юлташ митинга пухăннă мĕнпур çынсен туйăмĕсене лайăх каласа панă.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн ĕçе юратакан, ирĕклĕхе юратакан халăх историллĕ йывăр испытанисенчен яланах çĕнтерсе тухнă. Вăл çак расра та çĕнтерсе тухĕ. Фашистсене çĕмĕрсе тăкăпăр. Пирĕнтен кашниех икшер, виçшер çыншăн ĕçлĕ. Мĕнпур вăй-хала, пирĕнте мĕн лайăххи пур—çавсене пурне те эпир социализмлă тăван çĕршыва парăпăр.

Нумай работницăсем хăйсене ăçта янă çавăнта, пур çĕрте те пăлăртса çирĕплетнĕ вăхăтран нумайрах ĕçлеме кăмăл туни çинчен пĕлтернĕ.

АПШЕРОНСКИЙ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Майкопнефтекомбинат промыслисенче, Нефтегорск, Апшеронский, Хадыженский ятлă рабочи поселоксенче—патриотла хăватлă çĕкленӳ. «Тăшмана таптаса лапчăтăпăр!», «Пурсăмăр та, пĕр çын пек пулса, алла хĕçпăшал тытăпăр!»—çак сăмахсем совет çыннисен чĕлхисем çинчен каймаççĕ.

Промысласенче производствăллă çĕкленӳ ӳссе пырать. «Хадыженнефть» тресчĕн мĕнпур промыслисем нефть кăлармалли плана ирттерсе тултараççĕ. Июнĕн 22-мĕшпе 23-мĕшĕнче «Апшероннефть» тресчĕ иртнĕ кунхисенчен нумайрах нефть панă.

Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем! Ултавлă тăшман пирĕн çĕршыв çине тапăнса кĕчĕ. Тăшмана пĕр хĕрхенӳсĕр аркатса пĕтерсе тăкар!

☆ ★ ☆

Çулăмлă патриотсем

Фашист —тĕнчери чи ирсĕр ят, усал тăшман, вĕççе пит, юнĕçен, хура çăхан. Çав ирсĕрсем пирĕн чечекленсе пыракан социализмлă тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнчĕç. Совет çĕршывĕн кашни патриочĕ хура çăхансене — пирĕн ирĕклĕ çĕршыв çине килсе тапăннă фашистсене пĕтĕм хаярлăхпа тарăхса ылханать.

Совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне тăшмансем килсе тапăннине хирĕç патриотизмлă пысăк çĕкленӳпе ответлет.

Июнĕн 23-мĕш — мобилизацин пĕрремĕш кунĕ. Пурин те пĕр ĕмĕт: пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăннă ирсĕр тăшмана çапса аркатмалла.

Кĕске те çулăмлă сăмахсем:

— Фашистла ирсĕрсене пĕтерсе хума Хĕрлĕ Çар ретне яма ыйтатăп.

Çак сăмахсене çыракансем — ваттисем те, çамрăккисем те, арçынсем те, хĕрарăмсем те. Вĕсем пурте паянах алла пăшал тытса çапăçăва тухма хатĕр.

Сĕнтĕр райвоенкоматне кашни кун вуншар ыйту пырать. Колхозниксем, рабочисем тата служащисем хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне яма ыйтаççĕ, вĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, тăшмана пĕтĕмĕшпех пĕтерсе хуриччен çапăçма хатĕр. Акă вĕсенчен хăшпĕрисем: райпотребсоюз работникĕ Петровский юлташ, вăл 50 çула çитнĕ, хăйне паянах Хĕрлĕ Çар ретне ăсатма ыйтать. Районри çыхăну конторин çамрăк телеграфистки Попова, колхоз председателĕ Громов, запасра тăракан командирсемпе политработниксем Волков, Смирнов, Чернов тата ытти юлташсем те, тăшман пирĕн çĕршыв çине килсе тапăнни çинчен илтнĕ хыççăнах хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне ăсатма ыйтса заявленисем панă.

Совет патриочĕшĕн чи хакли — тăван çĕршыв, уншăн вăл хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешет. Ваттисемпе пĕрлех 1924 çулта çуралнă çамрăксем те хăйсене Хĕрлĕ Çар чаçне ăсатма ыйтаççĕ.

Рабочисем, колхозниксем, служащисем — пĕтĕм халăх Гитлерăн урнă йыттисем тапăннине хирĕç ĕç фронтĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, хăйсен ĕçри хастарлăхĕпе сисĕмлĕхне темиçе хут ӳстернипе ответлеççĕ. Мĕншĕн тесен, пирĕн кашни ӳсĕм, кашни çĕнтерӳ тăван çĕршывăн хăватне ӳстерет. Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳсем тума пулăшать. «Новый путь» колхоз членĕсем Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннине хирĕç ответлесе, пĕр кун хушшинче 11000 тенкĕ заем укçи пухнă, вĕсем кăçалхи заем укçине пĕтĕмпех парса татнă.

Çавăн пекех, ытти районсенчен те мобилизацин пĕрремĕш кунĕ пысăк çĕкленӳпе иртни çинчен пĕлтереççĕ. Мобилизаци çавтери пысăк çĕкленӳпе тата организованно иртни — вăл совет халăхĕн патриотизмне ĕçсыннисен мораллĕ çирĕплĕхне, хăйсен тăван çĕршывне юратса тăнине тата уншăн юлашки тумлам юн юлмиччен çапăçма хатĕррине татах тепĕр хут кăтартса парать.

М. М-в.

Нумайрах металл парар

ЗАПОРОЖЬЕ, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Запорожстальăн металлургн заводĕнчи домна, мартен, листопрокат цехĕсемпе ытти цехĕсенче пысăк çĕкленӳллĕ, нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Мартен цехĕн начальникĕ Почтман юлташ Молотов юлташ каланă сăмахăн содержанийĕ çинчен пĕлтернĕ. Унтан сталевар Васильевич юлташ сăмах илнĕ.

— Совет халăхĕ,—тенĕ вăл,—пысăк йышлă тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешӳре пĕр хут çеç мар паттăрлăх кăтартнă. Эпир интервентсене граждăн вăрçи тапхăрĕнче çĕмĕрнĕ. Пирĕн таса чикĕсем çине алă çĕклеме хăйнă Германи фашисчĕсене эпир нимĕн хăварми çĕмĕрсе тăкăпăр. Çакна асра тытăр агрессор: пирĕн Хĕрлĕ Çар, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, пире килсе çапнине хирĕç ответлесе, виçĕ хут вăйлăнрах тавăрса çапать. Пире большевикла парти, аслă, тăван Сталин çĕнтерӳ патне илсе пырать!

— Партипе правительство пирвайхи хут чĕнсенех эпир каллех Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне кайма, тăван çĕршыва кăкăрпа тăрса хӳтлеме хатĕр тăратпăр,—тенĕ сталеварсем—граждăн вăрçин участникĕсем Пашков, Фомичев тата Заяц юлташсем.

Пурте пĕр шухăшлă пулса йышăннă резолюцире металлургсем çапла каланă:

«Эпир вунă хут нумайтарах вăй хурса ĕçлĕпĕр, социализмлă тăван çĕршывăн тăшманĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас тесе, Хĕрлĕ Çара нумайрах металл парăпăр. Большевикла парти тавра тата хамăрăн тăван çулпуç, аслă учитель Сталин тавра татах та тачăрах пĕтĕçĕпĕр».

Орденлă магний заводĕнче, алюминий, электрод завочĕсенче, коксохимически заводпа ытти заводсенче ĕçсыннисен нумай çынлă митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртнĕ. Хăйсен резолюцийĕсенче ĕçсыннисем пурте пĕр кăмăллă пулса, татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлеме, пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн хăватне çирĕплетме хатĕр тăни çинчен калаççĕ.

Тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăрах!

Совет халăхĕ хăйне Германири фашистла клика илсе кĕнĕ вăрçă факчĕ умĕнче тăрать. Цивилизациллĕ этемлĕхĕн историйĕнче халиччен нихăçан курман ултав пулса тăчĕ. Вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕр, ăна пуçлама пирĕн енчен нимĕнле сăлтав та пулман çĕртенех Германи войскисем чечекленсе ларакан мирлĕ совет хулисемпе ялĕсем çине тапăнчĕç.

Хăйĕн тарăхăвĕпе тăшманшăн хăрушă пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн юратнă тăван çĕршывĕн, тĕнчери социализмлă пĕртен-пĕр государствăн чиккисене хӳтлеме çĕкленсе тăрать. Вăл большевикла парти, Совет правительстви тавра, хăйĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕçет. Хамăрăн тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç пынă кĕрешӳре хăйсене нихăçан тĕксĕмленми мухтава кăларнă Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Авиаци çак расра та хăйсен хăватне фашистла агрессорсене кирлĕ пек кăтартса парĕç. Вĕсем Совет правительствин приказне — вăрă-хурахла тапăнăва сирсе яма тата Германи войскисене пирĕн тăван çĕршыв территорийĕнчен хăваласа кăларма панă приказа чыслăн пурнăçа кĕртĕç. Тылра вара кашниех хăй вырăнĕнче, хăйĕн ĕçĕн вырăнĕнче большевикла организованноçпа, дисциплинăллă пулнипе, пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе боевой фронта çирĕплетсе пырĕ.

Империализмлă иккĕмĕш вăрçăн опычĕ кучухнехи вăрçăра авиаци мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса парать. Парти, правительство тата Сталин юлташ хăй ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе Совет Союзĕ калама çук чаплă, хăватлă авиаци туса çирĕплетрĕ. Çĕршывăн сталинла соколĕсем хăйсен тĕлĕнмелле чаплă техникине, вĕçĕ-хĕррисĕр хăюллăхне тата социализмлă тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăннине пĕтĕм тĕнче умĕнче пĕр хут çеç мар кăтартса пачĕç. Германин юн ĕçсе тăранма пĕлмен фашистла правителĕсен ушкăнĕ провокаци туса кăларнă çак вăрçăра та совет летчикĕсем арăслансем пек хăюллăн çапăçĕç, тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрĕç.

— Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркатăпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ.

Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланинчен илнĕ çак сăмахсене — вăй тата лăпкăллăх тапса тăракан сăмахсене — нумай миллионлă мĕнпур совет халăхĕ çирĕп шанчăкпа калать.

Совет Союзĕн Геройĕ

М. М. ГРОМОВ.

Аркатар çапса!

Чаплăран та чаплă
Çутă кунçуллă,
Социализмлă
Совет Союзĕн
Хаваслă хулисем,
Ялĕсем çине
Тăшман сĕмсĕрленсе
Кĕчĕ тапăнса.
Çĕршерĕн, пиншерĕн
Хурçă кайăксем
Çунатсене сарса
Вĕççе хăпарса,
Вутлă та хурçăллă
Çумăр çутарса,
Тăшмана çĕмĕреççĕ
Пирĕн паттăрсем.
Аслă Ленин уçнă
Чăнлăх çулĕпе,
Аслă Сталин уççăн
Ертсе пынипе,
Мĕнпур рабочисем,
Интеллигентсем,
Колхозник-хресченсем,
Единоличниксем,
Атьăр-ха, юлташсем,
Харăс хускалар,
Юнлă фашизма
Çапса аркатар!

Н. ШЕЛЕПИ.

Чăваш халăх поэчĕ, орденоносец.

Чугунçул работникĕсен сăмахĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Мускавран тата Хусан енчен килекен поездсене ăсатса янă хыççăн чугунçул станцинче ĕçлекенсем—дежурнăйсемпе стрелочниксем, путеецсемпе машинистсем общежити çумĕнчи столовăйне пуçтарăнчĕç. Пурте вырнаçса ларсан, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Шапков юлташ митинга уçни çинчен пĕлтерет. Тухса калама станци начальникĕ Селезнев юлташ сăмах илет.

— Урса кайнă Германи фашизмĕ пирĕн Совет Союзĕ çине вăрçăпа тухрĕ. Çакăнпа вăл хăйĕн пӳтсĕрлĕхне, бандитла сăн-питне татах тепĕр хут кăтартрĕ. Анчах Совет çĕршывне вăрçăпа тухса хăратма çук. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана, ирсĕр çĕлен-калтасене çапса салатма яланах хатĕр. Халĕ те вăл Германи фашисчĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса салатĕ, — тет вăл.—Пирĕн задача çакă пулмалла: хамăра шанса панă ĕçе пур енчен те тӳррĕн, пысăк пахалăхпа пурнăçламалла. Хастарлăн, тухăçлăн ĕçленипе эпир хамăрăн çĕршыв хăватне татах та ытларах тĕреклетме пулăшатпăр. Коммунистсен партийĕпе унăн çулпуçĕ тавра, совет правительстви тавра татах та тачăнрах пĕрлешер,—тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне Селезнев юлташ.

Сăмах калама вокзалти дежурнăй Капитонов юлташ илет.

— Фашистла çĕлен-калтасем пирĕн телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн. Çук! Вăл хапсăну нихăçан та пурнăçа кĕрес çук. Эпир хамăр çине тапăнакансене çирĕп отпор пама яланах хатĕр. Паян кунта, производствăра, ĕçлетпĕр пулсан, ыранах хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр тăратпăр,—тет Капитонов юлташ.

Весовщица Филиппова юлташ та пирĕн совет халăхĕ кирек мĕнле тăшмана та пĕр хĕрхенмесĕр çапса аркатма ялан хатĕр тăни çинчен калать.

— Чугунçул транспорчĕ—Хĕрлĕ Çарăн чи çывăх помощникĕ. Эпир, чугунçул работникĕсем, партипе правительство хушнă ĕçсене пысăк хастарлăхпа пурнăçлама хатĕр, кирлĕ пулсан пĕтĕм пурнăçа пама та пултаратпăр,—тет вăл.

Станци коллективĕн митингĕнче пурте пĕр çын пек пулса резолюци йышăнаççĕ. Унта çакăн пек каланă:

«Эпир, чугунçул станцинче ĕçлекенсем, Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине тапăннине ответлесе, хамăрăн Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса пыма, хамăра шанса панă ĕçе тӳррĕн пурнăçласа пыма, кирлĕ пулсан Хĕрлĕ Çар ретне тăрса хамăрăн юратнă çĕршыва сыхлама кайма пулатпăр. Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ пирĕн Сталин!»

„Марс“ колхозра

ЕЛЧĔК. СССР Совнаркомĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каласа, фашистла Германия Совет Союзĕ çине тапăнни çинчен пĕлтернине «Марс» колхоз членĕсем питĕ пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Митингра 187 çын пулчĕ. Колхозниксем, пĕрин хыççăн тепри тухса каласа, фашистла мерзавецсен вăрă-хурахла ĕçне питлерĕç.

— Совет халăхĕ, — тенĕ митинг йышăннă резолюцире, — фашистла Германи войскисене çапса аркатать. Гитлер пуçарнă вăрçăра Германи империализмĕ хăйĕн пуçне çиет.

Митинграх колхозниксем Гиммадуллин, Галифуллин, Манчеев, Гимухамедов юлташсем хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне яма ыйтса заявленисем паччĕç.

Пĕтĕм этемлĕх культурине пĕтерекенсем

Совет Союзĕ çине тапăнни — фашизм хăйĕн преступлениллĕ вăйĕнче тăвакан юлашки ĕç. Çак вăй этемлĕхĕн пĕтĕм историйĕ тăршшĕнче тунă культурăллă хаклăхсене хирĕç пырать.

Геббельс тата унăн хăйне тивĕçлĕ соратникĕсем классикăллă афоризм каланă: «Манăн умра культура çинчен каласма пуçласçĕ пулсан, эпĕ çийĕнчех пӳрнене хамăн автоматлă револьверăн курокĕ çине хуратăп». Культурăна таптаса тăкма шăпах çакăн йышши çынсем кирлĕ пулнă та ĕнтĕ!

Тĕнче тытса тăмалли Германи раси çинчен тата ытти мĕнпур расăсенчен пусмăрта пурăнмалли расăсем туса хурасси çинчен калакан кулăшла сĕмсĕр историллĕ «теорине» кăларса тăратма наукăна хирĕçле, цивилизацине хирĕçле тата урă ăстăна та хирĕçле пыракан вĕçĕ-хĕррисĕр курайманлăх кирлĕ пулнă. Çак «теорине» пурнăçа кĕртес ĕçе кӳршĕри çĕршывсене пусмăрласа илнипе пуçласа ямашкăн тĕлĕнмелле пысăк культурăсăрлăха чăн тискер кайăкла хаярлăхпа пĕрлештермелле пулнă.

Пурте пĕлеççĕ, çак «теорине» вĕçĕмренех пурнăçа кĕртсе пынин результачĕсем акă мĕнре: çĕнтерекеннисем те, парăннисем те — «высший раса» та, «низший расăсем» те — йăлтах выçă лараççĕ, Европăри чи нумай çăкăрлă, тырпул чи лайăх пулакан çĕршывсем те (чăннипех те ĕнтĕ çиçĕм çиçсе илнĕ пекех хăвăрт) саранча сырса илнĕ калча уйĕсем пулса тăчĕç. Вĕсен тĕллевĕ — историне вăтам ĕмĕрсем патне тавăрас тĕллев, çынсене — «Дядя Томăн хижини» чухнехи вăхăтсем патне тавăрас тĕллев преступлениллĕ те сĕмсĕр тĕллев пулни уççăнах курăнса тăрать.

Эпир çакăн пирки иккĕленместпĕр: Европăра камшăн этемлĕхĕн культурăллă прогресĕн интересĕсем хаклă, — çавсем çак историллĕ самантра Совет Союзĕпе — асса кайнă пусмăрçăсене нимĕн хăварми çĕмĕрсе тăкакан Совет Союзĕпе пĕрле. Академик **Е. ТАРЛЕ.**

Тăван çĕршывшăн пурнăçа пама хатĕр

Пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине ылханлă фашистсем вăрçăпа тухрĕç. Çук, вĕсен шухăшĕсем пурнăçа кĕреймĕç! Пирĕн мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çар ылханлă фашистсене çирĕп отпор парĕ. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать!

Манăн упăшка тăван çĕршыва сыхлама карĕ. Эпĕ хама та мобилизациленнĕ тесе шутлатăп. Хамăн ĕç вырăнĕнче пĕтĕм вăя, пултарулăха, пĕлĕве производствăра тухăçлăн ĕçлеме паратăп. Производствăра стахановла ĕçлесе хамăр тăван Хĕрлĕ Çара пулăшатăп.

Манăн август уйăхĕнче черетлĕ отпуска каймалла. Эпĕ отпуск илместĕп, производствăра стахановла ĕçлеме пулатăп.

Совет хĕрарăмĕсем, пурте пĕр кăмăлпа, хамăрăн Хĕрлĕ Çарти упăшкасемпе тăвансене пулăшма тухар. Дисциплинăна çирĕплетер, хамăрăн телейлĕ Совет Союзĕшĕн пĕтĕм вăй-хăвата парар. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать!

Пире, хĕрарăмсене, Совет влаçĕ телей пачĕ. Совет влаçĕ панă телейлĕхшĕн пурнăçа пама та шел мар.

А. В. ОРЛОВА.

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи работница.

Тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн!

Чăвашсен Государство Академ[...] театрĕн артисчĕсем Молотов юлташă[...] сăмахне радио тăрăх районра итле[...]рĕç. Июнĕн 23-мĕшĕнче Етĕрне хулин[...] че гастроле тухнă артистсем репетиц[...] пуçланас умĕн митинг туса ирттерчĕ[...]

— Фашистла Германия, — терĕç а[...]тистсем митингра, — ĕççыннисен ирĕ[...]лĕхне, Совет государствине пĕтер[...] хурасшăн. Çук, пулмасть вăл! Пирĕ[...] паттăр Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флоч[...] тата авиаци фашистла хура çăхансен[...] çирĕп отпор парасса шанатпăр.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артис[...] И. О. Молодов юлташ пĕтĕм артистсе[...] ячĕпе митингра çапла каларĕ:

— Партипе правительство пĕрре чĕ[...]сенех, эпир, пурте пĕр çын пек пулс[...] Хĕрлĕ Çар ретне тăрса телейлĕ тăва[...] çĕршывăн чиккисене сыхлама кир[...] хăш вăхăтра та хатĕр.

Артистсем митингра хальхи репе[...]туара улăштарса оборона çинчен çы[...]нă пьесăсене ытларах кĕртме йышă[...]чĕç.

Эпĕ, белофинсене хирĕç пынă çапă[...] участникĕ, тăван çĕршывшăн, Стал[...] юлташшăн çапăçăва кĕме, сцена çин[...] янăраса тăракан сасăма пулемет[...] улăштарма яланах хатĕр.

Сывă пултăр ирĕклĕ Совет çĕршыв[...]

Сывă пултăр Коммунистсен больш[...]викла Партийĕ тата унăн çулпу[...] юратнă Сталин!

Б. АЛЕКСЕЕВ.

РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ.

Ĕçри социализмлă дисциплинăшăн

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче «Сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ çине, çичĕ кунлă ĕç эрни çине куçасси çинчен тата рабочисемпе служащисене хăйсен ирĕкĕпе предприятисемпе учрежденисенчен тухса кайма чарасси çинчен» Указ кăларнăранпа çулталăк иртрĕ.

Çак Указ пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен чи çывăх интересĕсене палăртса тăрать; вăл — социализмлă индустрин çĕнĕ çĕкленĕвĕшĕн кĕрешмелли хăватлă оруди.

Совет Союзĕнчи рабочи класс, хăйĕн ĕçри хăватне палăртса, хамăрăн государствăн вăй-хăватне ӳстерме тăрăшса, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указне хапăл туса йышăнчĕ.

Мĕне пула кăлармалла пулнă-ха 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указа? Ăна кăларма пуринчен ытла тĕнчери положени хушнă. Çулталăк каяллахи вăхăтрах тĕнчери обстановка пит çивĕчленсе кайнă пулнă, çавăн пек чухне, Совет Союзĕн экономикăпа çар вăй-хăватне вăйлатса пыма, рабочи класс ытларах ĕçлени кирлĕ пулса тăнă.

Империализмлă иккĕмĕш вăрçă пушарĕ çĕнĕрен те çĕнĕ çĕршывсене хыпса илсе пынă. СССР тавра тăракан капитализм мĕнпур вăйпа хĕçпăшалланса пынă. Вăрçă вăрçакан тата вăрçа халлĕхе хутшăнайман капиталистлă çĕршывсен хуçалăхĕ пĕтĕмпех вăрçă интересĕсене пăхăнса тăрать. Вăрçă хатĕрĕсем туса кăларасси ӳссех пычĕ, вĕсене халыхи вăхăтра пит нумай туса кăлараççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче пур çĕрте те рабочисене кулленех 10—12 сехетшер тата ытларах та ĕçлеттереççĕ.

Çапла вара, тĕнчери обстановка пит те çивĕч пулнă. Империализмлă иккĕмĕш вăрçă условийĕсенче Совет Союзĕшĕн те вăрçă хăрушлăхĕ ӳснине коммунистсен партийĕпе Совет влаçĕ вăхăтра шута илнĕ. Халĕ ĕнтĕ, Германири фашистла правительсем пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăннă хыççăн, Совет Союзĕн экономикăпа çар вăй-хăватне ӳстерсе пыни пит те кирлĕ пулнине, халĕ те çавăн пекех кирлине кашни ĕççынни курса тăрать. 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указă çавтери вăхăтра кăларнă.

Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне, Сывлăш Флотне тĕреклетсе пырасси, вĕсен хĕçпăшалне аванлатсах пырасси, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăракан промышленноçа аталантарасси — совет çĕршывĕнчи кашни ĕççыннин задачи. Хамăрăн государствăна малалла тĕреклетсе пыма, отечественнăй вăрçăра тăшмана çĕмĕрсе тăкма металл, çĕркăмрăкĕ, нефть, самолетсем, танксем, тупăсем, снарядсем, паровозсем, вагонсем, станоксем, автомобильсем нумайрах кирлĕ, халăх хуçалăхĕн пур отраçлисенче те продукци нумайрах туса кăларни кирлĕ.

7—6 сехетлĕ ĕç кунĕ, çавăн пекех 6 кунлă эрне те хамăрăн çĕршыв умне туха тăнă задачăсене пурнăçа кĕртме çителĕксĕр пулнă. Капитализмлă çĕршывсенче рабочисене ĕçлеттерсе буржуази пуять,—çапах та унта рабочин талăкра 10—12 сехет тата ытларах та ĕçлеме килет. Пирĕн çĕршывра рабочи хăйшĕн, обществăшăн, государствăшăн ĕçлет,—çавăнпа вăл талăкра 8 сехет, урăхла каласан, çулталăк каялла ĕçлениниччен 1 сехет ытларах савăнсах ĕçлет.

1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указ ĕç кунне вăрăмлатрĕ. Çавăнпа пĕрлех тата вăл летунсемпе прогульщиксене, кахалсемпе харампырсене, производствăри йĕркене, предприятисенчи революциллĕ йĕркелĕхе пăсакансене хĕстерчĕ.

Кахаллăх, ĕçлемесĕр, çын вăйĕпе пурăнасси—эксплоататорлă стройран юлнăскерсем; эксплоататорлă стройăн законĕсем тахçан ĕмĕртенех хăйсем ĕçлемесĕр çын вăйĕпе пурăнакансене сыхласа тăнă. Хулиганствăпа анархистла иртĕнӳ те, ĕç çине йĕрĕнсе пăхасси те—капитализмлă обществăра çуралнăскерсем.

Пуянсем тата жуликсем —пĕр медалĕн икĕ енĕ пулса тăраççĕ, вĕсем капитализм çитĕнтернĕ паразитсем, социализмăн тĕп тăшманĕсем, тенĕ Ленин. Вăл çав тăшмансене халăх сăнаса тăмалла тума, вĕсем социализмлă обществăн правилисемпе законĕсене кăшт пăсассăнах, вĕсене хытă алăпа тыткалама хушнă.

Ленин: совет государствинче, çынсем хăйсемшĕн, хăйсен обществишĕн ĕçленĕ çĕрте, ĕçре çирĕп дисциплина пулмалла, ĕçрен пăрăнакансене тĕрмене лартмалла, тесе каланă. Ĕçлесшĕн мар харампырсене, паразитсене ирĕксĕрлесех ĕçлеттермелле, вĕсене суда памалла. Ленин сăмахĕсем тăрăх, совет сучĕн «ĕççыннисен дисциплинине тата самодисциплинине чи çирĕппĕн пурнăçа кĕртмелле», судсен умĕнче «халăха ĕçри дисциплинăна хăнăхтарас» (т. XXII, стр. 424) пысăк задача тăрать.

1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указ Ленин кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртекен, вăл харампырсене хирĕç, летунсене, жуликсене хирĕç, ĕçрен пăрăнакан, ĕçлемесĕр пурăнасшăн тăрăшакан çынсене хирĕç кĕрешме хушнине пурнăçа кĕртекен закон пулса тăрать те.

1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указа пурнăçа кĕртме ĕçе тата производствăна рабочин ĕç вăхăчĕн пĕр минутине те ахаль çухатмалла мар туса, ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ӳсе пымалла туса организацилемелле; ĕçри йĕркелĕхпе дисциплина та çакна пурнăçа кĕртме май паракансемсем пулмалла.

Çак задача—хозяйственниксен задачи кăна мар, вĕсен, чăн ĕнтĕ, производствăна тĕрĕс организацилемелле тата тĕрĕс ертсе пымалла. Çавăн пекех тата партипе профсоюз организацийĕсен те масса хушшинче куллен-кунах ĕçлесе, вĕсене ĕç çине коммунистла пăхма, дисциплинăллă пулма, çине тăрса ĕçлеме, йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма вĕрентмелле.

Социализмлă революци — вăл ĕç капитала çĕнтерни пулса тăрать. Юлхавлăх, ĕçлемесĕр, ытти çынсен ĕçĕпе пурăнасси—социализмшăн тăшманла йăласем.

Социализм ĕçлессинчен хăтаракан ырлăх пулса тăрать тесе калакан çынсем те тупăннă, ситменне ун пек çынсем халĕ те пĕтсе çитмен-ха. Çавăн пек кахалсен философине Сталин юлташ тусан пекех туса çĕмĕрсе тăкрĕ. Ун пирки Сталин юлташ çапла каланă:

«Хăш чухне калаççĕ: социализм пулсан, — вара мĕншĕн ĕçлемелле-ха? Елĕк те ĕçленĕ, халĕ те ĕçлетпĕр, вăхăт мар-и ĕçлеме пăрахмашкăн? Çакăн пек сăмахсем пачах та тĕрĕс мар, юлташсем. Çакă вăл—кахалсен философийĕ, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен труженсен философийĕ мар. Социализм пачах та ĕçе, хирĕç тăмасть. Пĕтĕмпех урăхла, социализм ĕç çинче пулса пырать. Социализмпа ĕçе пĕр-пĕринчен уйăрма çук. Ленин, пирĕн аслă учитель каланă: «Кам ĕçлемест, вăл çимест», тенĕ. Мĕне пĕлтерет-ха çакă, кама хирĕç пыраççĕ-ха Ленин сăмахĕсем? Эксплоататорсене хирĕç, хăйсем ĕçлемесĕр урăххисене ĕçлеттерсе, çынсен ĕçĕпе пуякансене хирĕç пыраççĕ. Тата кама хирĕç? Тата хăйсем кахалланакан, ытти çынсен ĕçĕпе усă курма хапсăнакан çынсене хирĕç пыраççĕ. Социализм, кахалланса пурăнма мар, пур çынсене те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме хушать, ыттисемшĕн мар, пуянсемшĕн мар, эксплоататорсемшĕн мар,—хăйсемшĕн, обществăшăн ĕçлеме хушать» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 402 — 403).

Совет çĕршывĕнчи рабочисемпе служащисен чи пысăк пайĕ халăхшăн, хамăрăн государствăшăн тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлет. Пирĕн çĕршыври малта пыракан çынсем, стахановецсем, вăхăта хаклама вĕренсе çитрĕç, вĕсем вăхăта минутăсемпе кăна мар, секундăсемпе шутлаççĕ. Стахановецсем промышленноçпа транспортра ĕçе малалла тĕртсе пыраççĕ, нумайрах та нумайрах рабочисем вĕсемпе, производствăра малта пыракан çынсемпе танлашса пыраççĕ.

Лайăх, тухăçлă ĕçленĕшĕн совет çĕршывĕнчи çынсем ĕç укçине те нумайрах илеççĕ. Пирĕн обществăра лайăх ĕçлекенсене материально хавхалантарасси çирĕппĕн пурнăçа кĕрсе пырать. Ĕçшĕн тӳлемелли социализмлă йĕрке çапла калать: «Кашнинчен унăн пултарулăхне кура, кашнине унăн ĕçне кура». Совет законĕ тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсен интересне сыхласа тăрать.

Совет законĕ рабочисемпе служащисен ĕçри йĕркене пăсакан пĕчĕк ушкăнне хирĕç пырать, вĕсем ĕçсĕрлĕх çуккипе, совет влаçĕ ĕçсĕрлĕхе пĕтерсе хунипе усă курса, тата совет государсви иртнĕ вăхăтра вĕсем çине ытла пит чăтăмлă пăхнине пула, заводран завода куçса çӳренĕ, ĕç дисциплинине пăснă, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесшĕн пулман.

Ĕç вăйĕ улшăнса тăни пысăк сиен кӳни, производствăна хавшатни, предприятие йĕркерен кăларни çинчен Сталин юлташ тахçанах кăтартса панă. Ĕç вăйĕ пĕрмаях улшăннине «тӳсе тăни», — тенĕ Сталин юлташ, — хамăрăн промышленность ĕçне пăсса ярасси, производство планĕсене пурнăçа кĕртмелли тата продукци пахалăхне лайăхлатмалли мая пĕтерсе хурасси пулать.

Летунсемпе прогульщиксем çĕршывăн халăх хуçалăхне мĕн тери пысăк сиен кӳнине, сăмахран, çак фактсенчен те курма пулать.

Çĕркăмрăк промышленноçĕ летунсемпе прогульщиксене пула 1940 çулти пĕрремĕш кварталта çĕркăмрăкĕ, мĕнпурĕ кăларма пултарнинчен шутласан, 100 пин тонна сахалрах кăларнă. Çĕрмамăкĕнчен пиравăр тĕртекен промышленноçра та 1940 çулта, июнĕн 26-мĕшĕнчи Указа пурнăçа кĕртиччен вăхăтра, летунсемпе прогульщиксене пула миллионшар метр пиравăр тĕртмесĕрех юлнă. Сталин ячĕпе тăракан автозавод ĕç вăйĕ улшăнса тăнă пирки 1940 çулти 4 уйăх хушшинче 6 миллион тенкĕ çухатнă. Ленинград[...] «Большевик» завод çав сăлтава пула[...] 5 уйăх хушшинче 4 миллион тенкĕ ç[...]хатнă. Летунсемпе прогульщиксем пу[...]ман пулсан, вара çĕршыв металл, çĕ[...] кăмрăкĕ, нефть, тракторсем, станоксе[...] танксем, самолетсем, пиравăрсем, ур[...]на тăхăнмаллисем т. ыт. те тата н[...]майрах илнĕ пулнă пулĕччĕ.

Миллионшар рабочисемпе работниц[...]сем летунсемпе прогульщиксене ча[...]ма, ĕç дисциплинине пăсакансене, [...] вăхăтне ахаль сая яракансене, каха[...]сене, рвачсене çирĕп алла илме ый[...]нă. Вĕсем ыйтнипе 1940 çулти июнĕ[...] 26-мĕшĕнчи Указа кăларса пурнăç[...] кĕртнĕ.

Указ тухсанах, ăна çирĕппĕн пурн[...]ça кĕртме тытăннă çĕрте. часах прои[...]водствăра йĕркелĕх пулса тăнă, [...] дисциплини çирĕпленнĕ. Чăн та, и[...]нĕн 26-мĕшĕнчи Указа пурнăçа кĕрте[...]сишĕн кĕрешесси кĕске вăхăтлăх [...] хăвăртах иртекен кампани, тесе шу[...]лакан руководительсем те тупăннă пу[...]нă, тата хăшпĕр парторганизацисен р[...]ководителĕсем Указа пурнăçа кĕрте[...]си—хозяйственниксен ĕçĕ кăна, те[...] шутланă пулнă. Çавăн пек çынсе[...] ЦК ВКП(б) июльти (1940 çул) Пленум[...] ĕç çине тĕрĕссипе мĕнле пăхмалли[...] кăтартса панă.

Июнĕн 26-мĕшĕнчи Указ летунсем[...] прогульщиксене те нумайĕшне тă[...] кĕртрĕ. Прогулсем тата ĕç вăйĕ улшă[...]са тăни промышленноçпа транспор[...] пит пысăк сиен кӳнине вĕсем те ку[...]чĕç. Производствăри йĕркене пăсака[...]сене хирĕç çĕкленнĕ тарăху хумĕ л[...]тунсемпе прогульщиксен пĕр пай[...] вĕсем тĕрĕс мар çулпа, иккĕлĕ çул[...] пыни çинчен шухăшлаттарнă. Анч[...] тахçантанпах йĕркене пăсса пурăн[...] летунсемпе рвачсем тата кахалсем [...]рет законĕн çирĕплĕхне те тĕрĕсле[...] пăхма шут тытнă: июнĕн 26-мĕшĕнч[...] Указ хыççăн та вĕсем прогулсем [...]нă, хăйсен ирĕкĕпех предприятисем[...]

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Тăшман самолечĕсене персе антарнă

(„Красная Звезда" хаçатăн ятарласа кайнă корреспонденчĕсенчен)

— Сывлăш! Иккĕмĕш номерлĕ цель, Германи бомбардировщикĕсем,—илтĕнчĕ разведчик красноармеец Фоменкон сасси.

Батарея маскировка туса вырнаçнă. Вăл ăçта вырнаçнине пĕлме пулман. Разведчик асăрхаттарнă хыççăн çийĕнчех хĕрÿллĕ ĕç пуçланса каять.

Ирхи тĕтрелĕхре тăшманăн икĕ бомбардировщикĕн силуэчĕсене кăшт кăна уйăрса илмелле.

Младший лейтенант Шкодаревич команда парать.

Расчетсене хăвăрт та тĕрĕс тăваççĕ. Вĕреннĕ вăхăт ахаль иртмен. Н-ски зенитнăй чаçре батарея ахальтен мар ĕнтĕ чи лайăх батарея шутланать.

— Целе тупнă!—доклад парать младший сержант дальномерщик Казьмин. Мĕнле çÿлĕшрине палăртнă, пур расчетсене те тунă.

— Противник самолечĕсен группи çине, малта пыракан самолет çине тĕллĕр! Гранатăпа!

Орудисен командирĕсем младший сержантсем Павленкопа Семенов, старшина Арсеньев, красноармеец Осипчик тата приборнăй отделенин командирĕ сержант Соловьев çиçĕм пек хăвăрт ĕçлеççĕ.

Пенĕ сасăсем илтĕнчĕç. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри илтĕнчĕç. Сывлăшра противник самолечĕпе юнашар разрывсем пулнипе тĕтĕм тухса кайни курăнчĕ.

— Самолет çунать!—хаваслăн илтĕнчĕ Фоменко сасси.

Темиçе секунда кăна иртет. Телефон янăраса каять. Младший сержант Штольтенберг батарейăран аяккарах вырнаçнă наблюдательнăй пунктран доклад парать:

— Наблюдательнăй пункт районĕнче—противникăн çулăм хыпса илнĕ самолечĕ. Уйнĕ вырăнта тĕтĕм мăкăрланни курăнать.

Тăшман самолечĕсем çине çĕр çинчен çеç мар, тата сывлăшран та пенĕ.

Аэродром тĕлĕнче хĕрлĕ ракета вĕçсе çĕкленчĕ. Тревога сигналĕ. Капитан Новиковăн дежурнăй эскадрильи хăвăрт вĕçсе çĕкленчĕ. Самолетсем çÿлелле хăвăрт хăпараççĕ. Истребительсем нимĕç бомбардировщикĕсене хирĕç вирхĕнеççĕ. Малта машинăсем курăнаççĕ. Вĕсем питех те çÿлте вĕçсе пынă. Новиков самолечĕ çÿлелле вирхĕнсе чăмнă. Акă вăл бомбардировщик патне вĕçсе çитнĕ. Анчах та çак вăхăтра лешсем зенитнăй орудисенчен перекен вырăнта пулнă. Ку вăл кĕçĕн лейтенант Шкодаревичăн зенитчикĕсем бомбардировщиксем çине пеме пуçланă. Новиков вĕсене чăрмантарас мар тенĕ, атака тума чарăннă.

«Çăлăнса тухаймĕç»,—тесе шутланă вăл, айккинелле пăрăннă. Çавăнтах вăл пирĕннисем сыхлакан объект патне татах икĕ бомбардировщик систермесĕр вĕçсе пынине курнă. Летчик-истребитель çÿлелле чăмса хăпарать. Акă вăл аялалла, тăшмансем çине ÿкекен чул пек чăмса анать. Пулясем лекнипе пĕр бомбардировщикĕ тĕтĕмленме пуçланă, айăк çине тÿннĕ те çĕре ÿкме пуçланă, сывлăшра тĕтĕм йĕрĕ хăварнă. Тепĕр бомбардировщикĕ, хăйĕн тусĕн пурнăçĕ телейсĕр вĕçленнине сиссе, васкавлăн тарма пуçланă. Мĕнтери хăваласа каяс килнĕ ун хыççăн Новиковăн, анчах та прибор бензин пĕтнине кăтартнă.

«Таврăнас пулать,—тесе шутлать капитан,—тăшмана ытти истребительсем персе антарĕç». Летчик çаврăнать те, аэродром патнелле вĕçсе каять.

Часах капитан машинипе юнашар тепĕр истребитель — лейтенант Ибатулинăн машини анса ларнă.

— Противникăн бомбардировщикне персе антарнă,—тесе пĕлтерет лейтенант Костромин майора.

Лейтенант сывлăшра вăрă-хурахла бомбардировщикпа çапăçни çинчен каласа панă. Противник совет истребительне курсанах тарма пуçланă, çÿлелле хăпарса пытанма хăтланнă, анчах Ибатулин ăна куçран çухатман. Атака татăклă та çиçĕм пек хăвăрт пулса иртнĕ. Пулеметран кăларса янă пулясем ăна пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра лекнĕ, бомбардировщика персе антарнă.

Çапла сывлăшран та, çĕртен те атакăласа тăшманăн тапăнăвне сирсе янă. Совет истребителĕсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Батальоннăй комиссар **Г. СМОРЫГО.**
Я. МИЛЕЦКИЙ.

Хĕвеланăç уйрăм çар округĕ, июнĕн 23-мĕш.
(Телефон тăрăх).

Бельгири выçă ларакан хĕрарăмсен демонстрацийĕсем çинчен тĕплĕн пĕлтерни

(Копенгагенран килнĕ çыру)

Бельгири «Пэн Реэль», «Травай» хаçатсемпе ытти хаçатсем Бельгири продовольстви тĕлĕшĕнчи положени чăтма çук йывăрланса çитни çинчен пĕлтереççĕ. Майпа июнь уйăхĕсенчен пуçласа, çак положени ытларах та ытларах йывăрланса пырать. Мĕншĕн тесен Германи захватчикĕсем çĕршыва пĕтĕмĕшпех юхăнтарса çитерне.

Хальхи вăхăтра Бельгире продовольстви памалли норма вăрçăччĕнхи нормăран, çĕршыва йĕркеллĕ пурăнма кирлĕ пулнă нормăран 4-мĕш пайĕ кăна шутланать. Бельгири пур пек продовольствин пĕчĕк запасĕ те Германи войскисене тăрантарса усрас ĕçе каять. Ĕçхалăхĕ выçă ларать, атмосфера çавтери хĕрсе çитнĕ, Бельгири хуласенче пулакан кирек мĕнле пĕчĕк инцидентран та час-часах выçлăха хирĕç, фашистла захватчиксем пуçпулса тăнине хирĕç пысăк демонстрацисем пуçланса каяççĕ.

Майăн 20-мĕшĕнче Антверпенра çакнашкал характерлă ĕç пулса иртнĕ. Хулари рабочисем пурăнакан пĕр вырăнта хăйĕн килне таврăннă арçын ача амăшĕ валли çăкăр илсе пынă, ăна вăл магазинра вăрланă пулнă. Амăшĕ ывăлне çапкаласа илнĕ, вăрланă çăкăра каялла леçтерсе парасшăн пулнă. Ывăлĕ çăкăра кайса пама килĕшмен, вара ăна амăшĕ каллех хĕнеме пуçланă. Ача куççулĕ юхтарса урама чупса тухнă. Ун хыççăн амăшĕ те урама чупса тухнă. Вĕсем тавра кÿршĕри хĕрарăмсем пухăннă. Ĕç мĕнле пулни çинчен пĕлсен, вĕсем питех те тарăхнă. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче кăшкăрса каланă çакăн пек сăмахсем янăраса кайнă: «Эпир выçă ларатпăр, пирĕн ачасем вăрра каяççĕ!»

Хĕрарăмсен ушкăнĕ урам тăрăх утнă, алăксен умĕнче звоноксем панă, кварталри мĕнпур хĕрарăмсене демонстрацие хутшăнма чĕннĕ. Унтан хĕрарăмсем хула управленийĕ патне кайнă.

Çак ĕçе хăйсем курнă çынсем—Антверпенран килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: демонстраци хула управленийĕ патне пырса çитнĕ вăхăтра унăн речĕсенче темиçе çĕр хĕрарăм пулнă. Хăйсен демонстрацийĕ çумне пĕрлешнĕ арçынсене хĕрарăмсем çапла каланă: «Эсир кĕтĕр-ха. Халĕ сирĕн черет мар. Сирĕн ĕçсем каярахпа пуçланĕç. Халĕ эпир ыйтатпăр, пире никам та нимĕн тума та хăяс çук».

Хĕрарăмсем хула управленийĕ патне пухăннă та çăкăр ыйтнă. Управленире пулнă Германи офицерĕ-гитлеровец хĕрарăмсем çине кăшкăрма пуçланă, вĕсене çийĕнчех саланса кайма хушнă. Çак вăхăтра вăл темиçе хутчен револьвере ярса тытнă. Анчах та хĕрарăмсем ăна хирĕç çапла кăшкăрнă: «Пер! Пирĕн çухатмалли нимĕн те çук урăх!».

Çавăнта пырса çитнĕ гитлерла охранниксем хĕрарăмсене вăйпах салатса яма хăтланнă, анчах та хĕрарăмсем жандармсене чышкăсем тыттара-тыттара янă тата çапла кăшкăрса каланă: «Эпир сире пирĕн çĕршыва килме чĕнмен! Тухса кайăр хăвăр пата, унта вара хăвăра майлă йĕркесем тăвăр!»

Жандармсем пĕр хĕрарăма арестленĕ, анчах та ăна хĕрарăмсем ирĕке кăларнă. Гитлерла охранниксен çĕнĕ отрячĕсем пырса çитнĕ, вĕсем те демонстрацине аран-аран кăна салатса янă. Вĕсем 12 çынна арестленĕ.

Çак факта хăй курнă çын çапла пĕлтерет: Бельгири ытти хуласенче те—Брюссельре, Шарлеуара, Льежра çакнашкал демонстрацисем пулса иртни çинчен вăл пĕр хут кăна мар илтнĕ.

Брюссельре Германири хĕрарăмсем вăрçа хирĕçле демонстрацисем туни çинчен калакан нумай хыпарсем сарăлаççĕ. Çапла пĕлтереççĕ: Берлинпа Кельнра çавăн пек демонстрацисене гитлерла охранниксем пулеметсенчен персе салата-салата янă.

Июнĕн 24-мĕш. (ТАСС).

Германи оккупанчĕсем Дани халăхне выçă лартаççĕ

Дани çине Германия тапăнса кĕнĕренпе иртнĕ çулталăк хушшинче, тесе çырат Швейцарири «Нейе Цюрхер цейтунг» хаçат, Германия Даниран кивçенле йĕркепе 542 миллион кронăлăх ялхуçалăх продукчĕсем, чĕртаварсем тата промышленность таварĕсем илсе кайнă. Çак вăхăт хушшинчех оккупантсен çарне тытса тăрас ĕçре Дания 647 миллион крона чухлĕ расход тунă. Пĕтĕмĕшпе илсен, тет хаçат, Германия Дани умĕнче пĕр миллиард крона ытла суммăллăх парăма кĕнĕ. Çак сумма Данин вăрçăччĕнхи пĕр çулталăк хушшинчи экспорчĕн суммипе танлашать.

Данине Германия туртса илнĕренпе унăн экспорчĕ пĕрмаях импортран пысăкрах шутланать. Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: Германия çĕршывăн продукчĕсене «кивçенле» сăптăрса илсе, унăн вырăнне нимĕн те тăратмасть. Германия хуçаланса пурăннă пĕр çулталăк хушшинче Данире сĕт суса илесси 34 процент чакнă, сысна ашĕн производстви—40 процент, çăмарта производстви—43 процент чакнă. Сыснасен хисепĕ 4,1 миллионран 2 миллион пуçа çити чакнă. Германия Данире мĕнле методсемпе хуçаланса пурăннине çакăн пек факт лайăх кăтартса парать: çĕршывра сысна ашĕн хакĕ экспорт хакĕсенчен нумай пысăкрах.

Данине тискер кайăкла çаратнине пула, ютçĕршывсене питех те нумай çу сутакан çак çĕршыв выçлăх паекĕ çинче ларать. Анчах çак паексене те пулин памаççĕ. Нумаях пулмасть «çăкăрсăр пурăнмалли кунсем» иртермелле тунă. Ольборг хулинче булочнăйсене эрнере пĕр кун пачах та уçмаççĕ, Рандерсра кăнтăрла 12 сехет çитсен çăкăр паекне пама чарăнаççĕ.

Июнĕн 24-мĕш. (ТАСС).

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

Июнĕн 24-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ награда илнĕ çынсене орденсемпе медальсем панă.

Финлянди белогвардейщинине хирĕç пынă кĕрешÿ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирсен группи награда илет.

Наградăланисен ячĕпе капитан З. С. Музыченко патриотла хĕрÿллĕ сăмах тухса каланă. Вăл нумаях пулмасть пирĕн çурçĕр-хĕвеланăç енчи чикĕре пулса иртнĕ событисем çинчен, Хĕрлĕ Çар Маннергейм линине—Германи фашисчĕсем активлăн хутшăнса ĕçленипе тунă линине çĕмĕрсе тăкни çинчен, белофинсене чаплăн çĕнтерни çинчен аса илтерне. Унтанпа ĕнтĕ пирĕн çĕршыв экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕнĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ, тăшмансене хирĕç пынă çапăçусенче туптанса çирĕпленнĕ Хĕрлĕ Çар хăйĕн боевой вĕренĕвне, хăйĕн техникăллă пуянлăхне вĕçĕ-хĕррисĕр нумай ÿстерчĕ.

— Пирĕн çĕршыва хирĕç тахçантанпах усал шухăшсем тытса пурăннă Германи фашизмĕ,—тенĕ Музыченко юлташ,—вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕрех пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăнчĕ.

Анчах çакна асра тытчăр фашистсем, асра тыттăр Гитлер: пирĕн Хĕрлĕ Çар вăл—халăх çарĕ, вăл халăхпа нимĕн уйăрălmи тачă çыхăнса тăрать, уншăн фашистла йыткĕтĕвĕсем хăрушă мар. Германи фашизмне ĕмĕрлĕхех пĕтерсе тăкăпăр! Çак задачăна пурнăçа кĕртес ĕç валли эпир пурте хамăрăн пурнăçа пама хатĕр тăратпăр.

Çĕнтерÿ пирĕнте пулĕ! Юнлă фашизма пĕтерсе тăкатпăрах!

Орденсемпе медальсене парса пĕтернĕ хыççăн М. И. Калинин юлташ награда илнĕ юлташсене пĕтĕм чĕререн ырлăх сунса саламланă тата вĕсене хăйсен ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума суннă. (ТАСС).

Зенитчиксем отлично ĕçлеççĕ

Германин 4 летчикне тыткăна илнĕ

ЛЕНИНГРАД ÇАР ОКРУГĔ, июнĕн 24-мĕш. (Пирĕн ятарласа кайнă корреспондентран телефон тăрăх). Ыран июнĕн 23-мĕш тенĕ чух çĕрле кĕçĕн лейтенант Пимченковăн зенитнăй батарейăн наблюдателĕ Ленинград еннелле вĕçсе пыракан тăшман бомбардировщикне курнă. Тепĕр самантранах батарея самолета хирĕç пĕррĕмĕш залп панă. Снарядсем машина патĕнчех çурăлнă.

Бомбардировщик экипажĕ çавăнтах хăйĕн бомбисене таса уй çине пăрахнă. Çакăн хыççăн вăл аялалла аннă та батарея çине пулеметран пеме пуçланă. Хăюллă зенитчиксем хăраса ÿкмен. Наводчиксем—Башкатовпа Усенко, заряд паракансем—Семеновпа Поклюев тăшман персе тăракан вырăнта хăюллăн та хăвăрт ĕçленĕ.

Тăваттăмĕш залп панă хыççăн бомбардировщика вут хыпса илнĕ, вара вăл аялалла анма пуçланă. Часах самолет йывăççем хыçне персе аннă.

Çакă вăл зенитчиксем курнă пирвайхи фашистла самолет пулнă, кĕçĕн лейтенант Пимченков хăйĕн дневникĕ çине çапла çырса хунă: «Июнĕн 23-мĕшĕнче пĕр сехет те 40 минутăра тăшманăн пирвайхи бомбардировщикне персе антартăмăр».

Тепĕр темиçе минута иртсен Н-ски чаçри боецсем нимĕçсен 4 летчикне: пĕр офицерпе виçĕ унтер-офицерне тыткăна илнĕ. («Красная Звезда», июнĕн 24-мĕш).

Совет Союзĕн США-ри фончĕсем çине хунă секвестра парахăç тунă

Америкăри финанс министерстви Совет Союзĕн США-ри фончĕсем çине хунă секвестра (усă курма чарнине) парахăç тунă. (ТАСС).

Рузвельт Совет Союзне пулăшу парасси çинчен пĕлтерни

Рейтер агентстви Вашингтонран радиограмма-молни парать. Радиограммăра çапла каланă: Рузвельт Советлă Российйăна мĕн май килекен пулăшăва йăлтах парасси çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

Учительсене арестлеççĕ

ОСЛО, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). «Варден» хаçат çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть шкул ачисен забастовкисем пулса иртнĕ, çакăн пирки Ослори пĕр шкулăн ректорне, Бергенри шкулăн ректорне тата ытти хуласенчи нумай учительсене арестленĕ.

Румынире шкулсем вырăнне тĕрмесем

Румынире политикăллă террор çавтери вăйланса кайнă, çавăнпа та çĕршывра тĕрмесем çителĕксĕр пулнипе аптăраççĕ.

Румынири «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юстици министрĕ Стойческу распоряжени панă тăрăх Слатинпа Васлуйри икĕ шкула хупнă, çав шкулсен çурчĕсенче тĕрмесем туса хунă. Васлуйра çĕнĕрен организациленĕ тĕрмене, тет малалла хаçать, 600 çынна хупса лартнă.

Июнĕн 24-мĕш. (ТАСС).

Францири горняксем хушшинчи выçлăх

ВИШИ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). «Кандид» хаçат çапла пĕлтерет: Францири нумай горняксем кунне пурĕ те 300 грамм çăкăр кăна илеççĕ, вĕсем вĕçĕмренех темиçешер кун хушши ĕçе тухмаççĕ, мĕншĕн тесен ялсенче çимелли шыраса çÿреççĕ.

Румынири хаçатсем хресченсен пурнăçĕ çинчен

«Вăйлă алăсемсĕр çĕрĕçĕ кирлĕ пек пулса пыма пултараймасть», — тесе çырнă июнĕн 5-мĕшĕнче Румынири «Аргус» хаçат. Çак çĕнĕ мар шухăш хальхи вăхăтра Румынири хаçатсенче час-часах тĕл пулать. Румынири экономика арканса каяс патнех çитсе тăнипе, кая юлнă ял çине те тимлĕрех пăхмалла пулса тăнă. Румынири чăнчăн пурнăçа илемлетсе кăтартма тăрăшакан хаçатсен те Румынири хресченсен йывăр пурнăçĕ пирки тревога пуçлама тивнĕ.

«Пирĕн хресченсене пеллагра, туберкулез, кĕçĕ халран ярать,—тесе çырать малалла «Аргус» хаçат.—Халăхăн шанчăкĕ пулса тăракан ачасем сайра-хутра кăна çулталăк тултариччен пурăнаççĕ, вилмесĕр юлакан ачасем те имшеркке, вăйсăр ÿсеççĕ».

Румынири хресченсен хальхи вăхăтри пурнăçĕ иртнĕ вăхăтсенчи пурнăçран нимĕнпе те уйрăм мар,—тесе çырать «Тимпул» хаçат.—Хальхи вăхăтра, иртнĕ вăхăтсенчи пекех, Румынири хресчен халăхĕ хушшинче ачасем нумай çуралаççĕ тата ачасемпе амăшĕсем питех те нумай вилеççĕ. Çак явленине ăнлантарса пама йывăр мар. Çакна çеç шута илмелле:

Хресченсем тăраниччен çиеймеççĕ, çакна пула йывăр ĕçре халран кайнă çынсен сывлăхĕ начарланса пырать, амăшсем вăйсăрланса пыраççĕ, вĕсен ачисем те имшеркке тата вăйсăр пулаççĕ».

Ачасем нумай вилнин сăлтавĕсен шутĕнче хаçат тата çакна кăтартса парать: хресченсем хушшинче хутпĕлменлĕх пуçпулса тăрать, ялта медицинăллă пулăшу çукпа пĕрех.

Июнĕн 23-мĕш. (ТАСС).

Çамрăк хĕр пултарулăхĕ

ИШЛЕЙ. «Автогигант» колхозри сĕт-çу фермине Юлия Трофимова юлташ ертсе пырать. Вăл 20 çулхи çамрăк хĕр, комсомолка, ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕн депутачĕ. Трофимова ертсе пыракан ферма—районра лайăх ĕçлекен фермăсенчен пĕри.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен партипе правительство постановлени йышăннă хыççăн, фермăри ĕçсем татах та лайăхланчĕç. Фермăри кашни работник планлă заданисене ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешет.

В. Павлова доярка çумне сакăр ĕне çирĕплетсе панă. Вăл сĕт суса илмелли планлă заданине кашни уйăхра ирттерсе тултарать. Апрель уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче вăтам шутпа кашни ĕнерен 5 литр çурă сĕт суса илнĕ пулсан, иккĕмĕш вунăкунлăхра — 6-шар литр, виççĕмĕш вунăкунлăхра — 6,4-шар литр суса илнĕ. Ытти дояркăсем те хăйсен планлă заданийĕсене ăнăçлăн тултарса ĕçлеççĕ.

Пăрусене пăхакансем те хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Планлă задани тăрăх, ултă уйăха çитиччĕнхи пăрусен вăтам шутпа кашни талăкра 450-шар грамм хутшăнса пымалла. Хальхи вăхăтра пăрусем 550-шар грамм, «Чернушка» тата «Чижик» ятлă пăрусем кашни талăкра 600-шер грамм хутшăнаççĕ.

Фермăра учет ĕçне çĕнĕлле йĕркеленĕ. Фермăра ĕçлекенсен ĕçĕсене кашни кунах тĕрĕс учета илсе пыраççĕ. Ферма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата 1941 çулшăн государствăна сĕт-çу тăратмалли обязательствăсене тултарнă.

В. ГУСЬКОВ.

Ĕçри социализмлă дисциплинăшăн

ЮЛАШКИ

учреждениесенчен пăраха-пăраха кайнă. Çав вăхăтра совет çучĕ ĕçе тытăнчĕ, ĕçрен пăрăнакансене государство ирĕкĕрлесси пурнăçа кĕме пуçларĕ.

Прогульщиксемпе летунсене суд тунă чухне рабочисен массисем производство дезорганизаторĕсен илемсĕрлĕхĕн-питне курчĕç. Ĕçри социализмлă дисциплинăна пăсакансене хирĕç кĕрешме ĕçсынниксем хăватлăн пулăшса пыраççĕ. Совет халăхĕ харампырсемпе ахалсене курайманă, мĕншĕн тесен вăл çакна пĕлсе тăрать: **«çын пурăнать, апат çиет, анчах ĕçлемест пулсан, çакă ĕнтĕ вăл урăх çын ĕçне çие пурăннине пĕлтерет»** (Калинин).

Июнĕн 26-мĕшĕнчи Указ летунсене ыттăн пырса çапрĕ. Ĕç вăйĕ улшăнса тăнине Указ чарса лартрĕ. Предприятисен, цехсен, участоксен руководителĕсем рабочисемпе служащисен улшăнса тăман составĕпе ĕçлеме май илчĕç. Прогулсем нумай чакрĕç. Ĕçри дисциплина çирĕпленчĕ. Социализмлă мăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса кайрĕ. Ударниксемпе стахановецсен речĕсем ÿсме тытăнчĕç. Малтанхи вăхăтра ĕç вăйĕ çитменнипе аптăранă нумай предприятисенче рабочисем ытлашшипех те (пурри палăрчĕ, вĕсене вара производство ÿснĕ май рабочисем кирлĕ заводсемпе фабрикăсене, шахтăсемпе рудниксене куçарма май килчĕ.

8 сехетлĕ ĕç кунĕ тата 7 кунлă ĕçри тунипе ĕç вăхăчĕ, Указ тухиччен пулнипе танлаштарсан, 15 процент ытла яхăн хушăнчĕ. Паллах ĕнтĕ, ĕç вăхăчĕ хушăннă май, ĕçри дисциплина çирĕпленнĕ тата ĕç тухăçлăхĕ ÿснĕ май промышленность продукци туса кăларасси те ÿсмелле пулнă.

Чăнах та, промышленноçăн нумай отраслисенче Указ кăларнă хыççăн тепĕр уйăхранах улшăну пулма пуçларĕ. 1940 çулти июльрен пуçласа промышленность продукци туса кăларасси пĕрмаях ÿссе пычĕ.

Пит юлса пынă предприятисем тата промышленность отраслисем те плансене тултарса пыма пуçларĕç. Хура металлурги— металл туса кăларассине, çĕркăмрăк промышленноçĕ—кăмрăк кăларассине ÿстерчĕç; машиностроенин, нефть промышленноçĕн, сăрт-гу промышленноçĕн ĕçĕсем ÿссе пыма тытăнчĕç; цветной металлургин т. ыт. те ĕçĕсем юсанчĕç.

1940 çул вĕçĕнче, тĕнчери обстановка çавăн пек пулса тăнине пула, промышленность производство планне тултарас ĕçре чылай пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулчĕ. Çапах та 1940 çулта промышленность продукци туса кăларни 11 процент ÿснĕ. Продукци туса кăларасси ÿснĕ вăхăтрах промышленноçа, уйрăмах машиностроение, халăх хуçалăхĕпе çĕршыв оборони валли кучухнехи чи малта тăракан, чи çĕнĕ машинăсемпе механизмсем туса кăларни кирлĕ пулнă май, урăхлатса çĕнетсе пынă.

Кăçалхи çул та промышленность çĕкленсех пырать, ку вăл ĕçри дисциплинăпа йĕркелĕх çирĕпленнинчен те, ĕç тухăçлăхĕ ÿснинчен те килет.

1941 çулти пилĕк уйăх хушшинчи ĕç итогĕсене пурте пĕлеççĕ. Наркомчерметăн металлурги заводĕсем чугунпа хурçă шăратас, прокат тăвас, кокс хатĕрлес, тимĕр руди кăларас плансене тултарнă. Нефть промышленноçĕ нефть тата газ кăларас плана ирттерсе тултарнă. Чугунçул транспорчĕ (тиес тата пушатас енĕпе), хими промышленноçĕ машиностроени, резина, хут, текстиль апат-çимĕç промышленноçĕсен, промышленноçăн ытти отраслисен те çĕршер предприятисем плана ирттерсе тултарнă.

Çакна рабочисем, инженерсем, техниксем, пĕтĕм рабочи класо паттăрăн ĕçленипе тунă, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе вĕсем социализмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене туса пыраççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса палăртса, çитменлĕхсене пĕтерме анлă программа палăртса пачĕ. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ хуçалăх ĕçĕнчи тата партипе профсоюз ĕçĕнчи руководительсене ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тумалли решенисемпе хĕçпăшаллантарчĕ, вĕсене пурнăçа кĕртни промышленноçпа транспорт ĕçĕнче çĕнĕрен ÿсĕм тума, социализм çĕршывĕн экономикăпа çар вăй-хăватне малалла тĕреклетме май парать. Конференци çакна палăртрĕ: промышленноçпа транспортра хăйсен ирĕкĕпех ĕçрен тухса кайнисем тата прогулсем чакрĕç пулин те, çавсем пĕтĕмпех пĕтмен-ха. Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци партипе профсоюз организацисен, промышленноçпа транспорт работникĕсен, ĕç вăйĕ улшăнса тăнипе тата прогулсемпе кĕрешесси кĕске вăхăтлăх кампани маррине, ăна пурнăçа кĕртме массăсем хушшинче тăтăшах ĕçлесе пыма кирлине асра тытса, ĕç дисциплинине пĕрмаях çирĕплетсе пымалла, тесе кăтартса пачĕ.

Халичченех та хăшпĕр предприятисемпе учрежденисенче прогул тăвакансем пулаççĕ. Чăн та, прогул тăвакансен хисепĕ июнĕн 26-мĕшĕнчи Указ тухнă хыççăн пит нумай чакнă, анчах вĕсем пĕртте пулмалла мар. Прогулсем тата ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе пăрахса кайнисем сайра хутра пулкалани те предприятире учрежденире ĕç дисциплини кирлĕ таран çирĕпленсе çитменнине, руководительсем производствăра большевикла çирĕп дисциплина туса çитерейменнине кăтартать. Прогулсем пулкалани çавăн пекех тата хăшпĕр предприятисенче политикăллă-массăллă ĕç çителĕксĕрри çинчен те калать.

Хăшпĕр чухне тата, хуçкĕретĕнех прогул тунисĕр пуçне, сисмен çĕртен прогул тунисем пулаççĕ: производствăра ĕçлес вырăнне тĕркĕшсе, унта-кунта çÿресе вăхăта ирттереççĕ, ĕçе тĕрĕс мар организациленипе тата ытти сăлтавсене пула та простойсем, туллин ĕçлемесĕрех вăхăта ирттернисем пулаççĕ, çавна пула вара ĕç тухăçлăхĕ чакать. Чылай предприятисемпе учрежденисенче вăхăтра ĕçе тытăнманнипе е вăхăтченех ĕç пăрахнипе кашни работникăн кулленех 10 минута таран çухалать, çулталăкра вăл пит нумай пухăнать.

Пирĕн çĕршыври рабочи класс хушшинче патриотла лозунг çуралчĕ: «Тĕнчери чи кĕске ĕç кунĕ—чи тухăçлă ĕç кунĕ пулмалла. Ĕç вăхăтĕнчи 480 минута—пĕтĕмпех государствăна». Çак ырă сăмахсем совет çĕршывĕнчи миллионшар çынсем ĕç çине коммунистла пăхнине, вĕсем пирĕн çĕршывăн металл, çĕркăмрăкĕ, нефть, машинăсем, самолетсем, танксем, тупăсем, снарядсем, тĕрлĕрен таварсем ытларах пулччăр тесе хĕрÿллĕн тăрăшнине кăтартса тăраççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ совет çĕршывĕнчи патриотсем мобилизациллĕ хатĕрлĕхре тăни курăнать.

Хальхи вăхăтра, Германин юншăн çунакан фашистла правителĕсен ушкăнĕ пирĕн çĕршыв çине тапăннине хирĕç отечественнăй вăрçă пуçланса кайнă чухне, ĕç дисциплинине пур çĕрте те тата ытларах çирĕплетмелле. Кашни харпăрхăй вырăнĕнче вăя шеллемесĕр ĕçленипе Хĕрлĕ Çара тăшмана çĕмĕрсе тăкма пулăшар.

Н. М.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗ РСФСР

об'являет прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений.

ГИДРОТЕХНИЧЕСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы); осушению заболоченных земель, орошению земель и искусственному дождеванию; мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций малой мощности для колхозов, совхозов и МТС.

ЗЕМЛЕУСТРОИТЕЛЬНОЕ ОТДЕЛЕНИЕ готовит техников землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по угломерной и вертикальной с'емке (теодолитная, мензульная и производство нивелировки) для составления с.-х. карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования и строительства промышленных и жилых сооружений; отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Желающие поступить в техникум в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: город Мариинский-Посад, ЧАССР, ул. Ленина, № 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 15 августа с. г. с документами: 1) об образовании, 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографию, 5) две фотографические карточки.

С 15 по 28 августа будут приемные испытания по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР, в об'еме программы неполной средней школы.

Окончившие в 1941 году неполную среднюю школу по вышеуказанным предметам с отметками „отлично" принимаются в техникум без испытаний. Окончившие 8 и 9 классы принимаются на 1 курс техникума без испытаний.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями. Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками „отлично", будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1941 года.

3—2 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2520 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. б. 58_84 п. л.